*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

# ХРЕСЧЕН САССИ

39 (2552) [1]
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

2015
май/çу 27
ЮНКУН

1991 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

ÇУРАКИ

# Ака-суха вĕçленет – чун савăнать

Çурхи ăшă çанталăк çĕр ĕçченĕсене ака-сухана вăхăтра вĕçлеме пулăшса пырать темелле. Пĕр хушă шăрăх та çиллĕ çанталăк тăни ĕçченсене самаях хăртнăччĕ. Вĕсен кăмăлне ăнланнăн кĕçех ăшă çумăр чашлаттарса çуса кайрĕ, çĕре палăрмаллах нӳретрĕ. Халĕ акă каллех хĕвел ăшшăн пăхать. Хуçалăхсенче юлашки гектарсем çинче тăрăшаççĕ.

Çак кунсенче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев район, хула ертӳçисемпе видеоконференци ирттернĕ, çивĕч ыйтăва – çураки мĕнле пынине – сӳтсе явнă. Хальхи вăхăтра районсенче лару-тăру мĕнлерех-ха?

**Тăвай.** Çумăр витререн тенĕн тăкнă хыççăн районта уй-хир ĕçĕсене вăхăтлăха чарса лартма тивнĕ. Çанталăк лайăхлансанах лаптăксенче техника хуçаланма тытăннă. «Акконд-агро» пĕрлешӳре, «Чутеевский», С. Илларионов фермер хуçалăхĕнче хĕрсех куккурус акаççĕ.

«Родник» пĕрлешӳре, С. Михайлов, А. Петров фермер хуçалăхĕсенче вара çĕрулми лартаççĕ.

**Элĕк.** Ялхуçалăх организацийĕсенче, фермер хуçалăхĕсенче 6 685 гектар çинче пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсем акса хăварнă. Ку палăртнин 100 проценчĕ пулать.



Тăвай район механизаторĕсем

Сăнӳкерчĕкĕ www.cap.ru сайтран илнĕ

Халĕ районта мĕнпур техника, ĕç çыннисем – «иккĕмĕш çăкăр» уйĕсенче. Ăна 451 гектар лартнă та ĕнтĕ (46 процент).

**Йĕпреç.** Министр çумĕ Ирина Кошкина нумаях пулмасть Йĕпреç тăрăхĕнчи Александр Ильин фермер хуçалăхĕнче пулчĕ. Унта кăçал 20 гектар çĕрулми лартма пăхнă. Хальлĕхе ĕçе тытăннă кăна пулин те лартнă лаптăксем куллен хушăнаççĕ. Çурхи культурăсене 220 гектар акса хăварнă.

**Комсомольски.** Районти ялхуçалăх организацийĕсем, фермерсем пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене эрне каялла акса пĕтернĕ. Анчах ĕç вĕçленнĕ тесе калама иртерех-ха. Комсомольски енче çулсеренех çĕрулми, пахчаçимĕç чылай лартса-акса хăвараççĕ. «Иккĕмĕш çăкăр» кăна 1 558 гектар лартма палăртнă. Май уйăхĕн 25-мĕшĕ тĕлне вăл 1091 гектар йышăннă (70 процент).

Майăн 25-мĕшĕ тĕлне республикăра пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене 197 962 гектар акса хăварнă, ку – палăртнин 99,9 проценчĕ. Чылай районта ака вĕçленĕ. Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар, Çĕрпӳ, Шупашкар, Шăмăршă, Тăвай тăрăхĕсенче юлашки гектарсем çинче ĕç пырать.

7 892 гектар çинче «иккĕмĕш çăкăр» лартнă (63,8 процент). Улатăр, Патăрьел, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Пăрачкав, Шăмăршă, Елчĕк районĕсенче ку ĕç вĕçленнĕ ĕнтĕ. Палăртнă вăхăт тĕлне пахчаçимĕç 570 гектар йышăннă.

**Лариса НИКИТИНА.**

## Республика уй-хирĕнче майăн 25-мĕшĕ тĕлне

| Районсем | Çурхисем акнă | | Çĕрулми лартнă | | Пахчаçимĕç акнă | Кĕрхисене апатлантарнă | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | га | % | га | % | га | га | % |
| Улатăр | 9354 | 100 | 95 | 105,6 | 15 | 5266 | 77,2 |
| Элĕк | 6685 | 100 | 451 | 46 | 15 | 2450 | 81,6 |
| Патăрьел | 15159 | 100,3 | 1645 | 100 | 146 | 3876 | 76,5 |
| Вăрнар | 14262 | 104,2 | 571 | 49,2 | 1 | 3304 | 78,1 |
| Йĕпреç | 6079 | 100 | 130 | 76,5 | 14 | 1950 | 71,3 |
| Канаш | 11401 | 102,4 | 184 | 34,5 | 5 | 3160 | 61,7 |
| Куславкка | 7635 | 100,2 | 553 | 55,9 | 42 | 3060 | 85 |
| Комсомольски | 11613 | 100,8 | 1091 | 70 | 120 | 4520 | 88,6 |
| Красноармейски | 9995 | 100 | 305 | 110,9 | 2 | 2139 | 65,1 |
| Хĕрлĕ Чутай | 3667 | 100 | 20 | 100 | 1,5 | 1500 | 94,6 |
| Сĕнтĕрвăрри | 4595 | 98,9 | 242 | 57,1 | 8 | 2230 | 86,8 |
| Муркаш | 9100 | 100 | 312 | 40,6 | 39 | 4285 | 73,9 |
| Пăрачкав | 10147 | 100,1 | 20 | 181,8 | - | 4548 | 66 |
| Вăрмар | 11910 | 99 | 710 | 55,6 | 13 | 2700 | 60,8 |
| Çĕрпӳ | 14180 | 99,6 | 151 | 44,4 | - | 5760 | 85,8 |
| Шупашкар | 9239 | 94 | 29 | 24,6 | 8 | 2901 | 72,4 |
| Шăмăршă | 7950 | 98,5 | 212 | 100 | 5 | 2288 | 67,3 |
| Çĕмĕрле | 1802 | 100,2 | 4 | 4,5 | - | 1102 | 100 |
| Етĕрне | 9309 | 100 | 319 | 60,1 | - | 3687 | 66,8 |
| Елчĕк | 14950 | 100 | 740 | 100 | 129 | 4415 | 77,3 |
| Тăвай | 8930 | 96,9 | 108 | 24,4 | 7 | 880 | 30,9 |
| Республикипе | 197962 | 99,9 | 7892 | 63,8 | 570 | 66021 | 73,7 |

## ÇЫРĂНТАРУ – 2015

| Индекс | Кăларăмсем | Çырăнтару хакĕ | | |
|---|---|---|---|---|
| | | Почта уйрăмĕнче | «Чăваш пичет» тата «Советская Чувашия» киоскĕнче | Редакцире |
| 54800 | Хыпар | 798-06 | 288 | 144 |
| 78353 | Хыпар-шăмат кун | 345-54 | 150 | 90 |
| 54838 | Хресчен сасси | 297-78 | 168 | 114 |

КĔСКЕН

### Аслă поэтăмăра халалласа

Иртсе пыракан çулталӑк пирĕн республикăра литературăна тата чăваш поэзийĕн аслă классикне Константин Васильевич Иванова халалланине пурте пĕлетпĕр. Паян вилĕмсĕр "Нарспи" авторĕ çуралнăранпа 125 çул çитрĕ. Константин Иванов Чăваш Ен, тĕнче историйĕнче паллă йĕр хăварнă. Вăл – поэт та, драматург та, куçаруçă та, художник те, фольклорист та... 25 çул кăна пурăнма ĕлкĕрнĕскер анлă тавракурăмлă, питех те пултаруллă пулнă. Йывăр чир çапса антарман пулсан пултарулăхĕпе татах та тĕлĕнтерĕччĕ.

Хресчен çемйинче çуралнă пушкăрт чăвашĕн "Нарспи" поэми паян та çĕр-çĕр çыннăн чунне пырса тивет: пăлхатать, хумхантарать, шухăша ярать. Чĕлхи, сăнарлăхĕ тепĕр ĕмĕр иртсен те поэмăна çухалма памĕ, революциченхи чăваш культурине сăнлакан чи лайăх наци произведенийĕ шутланĕ.

Константин Иванова халалласа паян республикипех пĕлтерĕшлĕ мероприятисем иртеççĕ. Унăн палăкĕ умне те халăх йышлă пуçтарăнать.

### Чи лайăх регионсен йышĕнче

Раççей регионĕсен инноваци аталанăвĕн рейтингĕнче Чăваш Республики чи лайăх 10 регион шутне кĕнĕ. Ку рейтинга Экономикăн аслă шкулĕн статистика тĕпчев институчĕн экспертсем хатĕрленĕ. Мускав, Санкт-Петербург, Тутарстан, Калуга облаçĕ хыççăн пирĕн республика 5-мĕш вырăна тухнă.

Раççейĕн 83 регионне 37 кăтартупа хакланă. Вĕсене тăватă ушкăна уйăрнă: социаллă пурнăçпа экономика условийĕ, ăслăлăхпа техника хăвачĕ, инноваци политикин пахалăхĕ тата регионăн хăйĕн инноваци тĕлĕшĕнчи ĕçĕ.

"Технологи инновацийĕ енĕпе малта пыракансем – çĕнĕлĕх тупса ăна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пуçару кăтартакан компанисем. Кунашкаллисем Чăваш Енре тата Мордовире йышлă. Технологи шутне кĕмен инновацисемпе те Чăваш Республики малта пырать, унпа пĕрлех – Тутарстан", – пĕлтерет "РосБизнесКонсалтинг" издани.

Асаилтерер, республикăра инноваци мелне тĕпе хурса кăларнă продукци калăпăшĕ пĕтĕмĕшле вăсен 17,6 проценчĕне танлашать. Юлашки вăхăтра Чăваш Енре ют çĕршывсенчен Сербин, Германин, Японин, Италин, Испанин инноваци проекчĕсем пурнăçланаççĕ.

### Урам çулĕсене вак чул сараççĕ

Республикăн транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министрĕ Владимир Филиппов пĕлтернĕ тăрăх – ялсенче çулсем тума кăçал 156 млн тенкĕ уйăраççĕ. Çак вăсерен 50 миллионĕ Канаш, Вăрнар, Йĕпреç, Красноармейски, Муркаш, Пăрачкав, Çĕмĕрле тата Елчĕк районĕсенче 2013-2014 çулсенче пуçланă çул строительствине е юсава вĕçлеме каять. Çак çул республикăри 115 ялта урамсене вак чул (щебенка) сарма тытăнмалла, вăрăмăшĕ пĕтĕмпе 106 километра çитмелле.

## ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 27.05 | 28.05 |
|---|---|---|---|
| Температура, ⁰С | 2–4 сехетре<br>14–16 сехетре | +27<br>+19 | +27<br>+19 |
| Çумăр çăвать | | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 747 | 744 |

# Конкурса пĕтĕмлетнĕ

«Фермер ĕçне пуçăнакан», «Çемье ферми» тĕллевлĕ программăсем ял ĕçченĕсемшĕн çул уçрĕç темелле. Патшалăх пулăшăвĕпе усă курса бизнес пуçарса яракансен йышĕ çулран çул ÿссе пырать. Грант илме конкурса хутшăнакансем те самай. «Конкурса хутшăнни ĕçе пĕлсе йĕркелеме пулăшать. Бизнес-план хатĕрленĕ май аталану çулне витĕр курса-пĕлсе тăран темелле. Çитменлĕх те куç умĕнчех», – теççĕ фермерсем. Грант укçи пысăках мар, çапах малтанлăха сывлăш çавăрса яма çитет.

Унччен вĕсем конкурса хутшăнма иккĕленни те сисĕнетчĕ. «Пире пулăшу тивмест-тăр», – тенине час-часах илтме тÿр килнĕ. Грант илекенсен йышĕ ÿснĕ май иттисен шухăшкăмăлĕ улшăнчĕ. «Вĕсем пултарнине эпир те тăватпăрах», – теççĕ халĕ çĕр ĕçченĕсем. Пултаруллă çынсем хăюллăнах фермер хуçалăхĕ йĕркелеççĕ, патшалăх пулăшăвне илме конкурса хутшăнаççĕ.

Кăçал ЧР Ялхуçалăх министерствине грант илме 186 заявка тăратнă. Çав шутра çемье фермине аталантарма – 17, фермер ĕçне йĕркелесе яма – 169.

Çак кунсенче ятарлă комисси вĕсен 166 бизнес-планне пăхса тухнă (çемье фермипе – 17, фермер ĕçне пуçăнакансенне – 149).

2015 çулта фермер ĕçне пуçăнакансене хавхалантарма республика бюджетĕнчен – 1 млн та 6,8 пин тенкĕ уйăрмалла, федераци хыснинчен – 11 млн та 571 пин тенкĕ. Фермер хуçалăхĕнче çемье фермине аталантарма республикăран – 609 пин, федерацирен – 11 млн та 571 пин тенкĕ.

Комисси ларура фермер хуçалăхне йĕркелесе яма хальлĕхе 18 çынна суйласа илнĕ. Вĕсем кашни районтанах пур темелле. Вăрнар тăрăхĕнчен вара виççĕн: Александр Аврамов, Инга Балыкова, Петр Самаров. Пăрачкав (Анатолий Аржаев, Николай Макарчев), Канаш (Павел Семенов, Татьяна Захарова), Куславкка (Валерий Гаврилов, Юрий Петров) енчен икшер фермер.

Çемье фермине аталантарма виçĕ çын грант илнĕ: Тăвай тăрăхĕнчи Григорий Прокопьев (сĕтçу фермине юсаса çĕнетме), Валерий Грачев (фермер хуçалăхĕн никĕсĕ çинче çемье фермине йĕркелеме), Александр Белов (ĕне фермине çĕнетме). Çывăх вăхăтра çĕнтерÿçĕсен йышĕ каллех хушăнĕ.

# Купăста лартаççĕ



Сăнÿкерчĕксене www.cap.ru сайтран илнĕ

Çуркунне хресчен пуç чиксе утнă, кĕркунне пуç çĕклесе пынă тенĕ. Хĕрÿ тапхăрта, çуракинче ĕç çыннин каçăрălса утма-и, пуç çĕклеме те вăхăт çук. Вăрнар районĕнчи Михаил Тарасов фермер кăвак шуçăмпах уй-хире васкать. Çурхи лăпкă кунăн кашни сехечĕпе туллин усă курма тăрăшать. Кăçал унăн çурхи культурăсем 220 гектар йышăнмалла, купăста – 16, хĕрлĕ кăшман – 2.

Ĕçченсем çĕр типсенех техникăна уй-хире кăларнă. Утмăл гектар çинче нумай ÿсекен курăксене сÿреленĕ, минерал удобренийĕпе апатлантарнă.

Хальхи вăхăтра хăватлă техника туянма çăмăл мар. Хакĕсем кĕсьене пушатсах хăвараççĕ. Фермер техника паркне çĕнетсе пыма тăрăшать-ха, анчах киввине те пăрахăçламасть. Пурăнан пурнăçра катăк пуртă та кирлĕ пулать. Хĕрÿ тапхăрта вĕсемпе те усă курать. «Совет тапхăрĕнче туса кăларнисем шанчăклăрах та, – шÿтлеççĕ вĕсем. – Вансан та юсама çăмăл».

Хуçалăхра хĕрсех ир пулакан купăста лартаççĕ. Хальлĕхе 1 гектар ытла лартма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Ешĕл калчана çийĕнчех шăвараççĕ. Çак ĕçе Уравăшра пурăнакансене те явăçтарнă.

# Ырă ĕçĕн хакĕ пысăк



Денис Харитонов





Михаил Шачкин

### Çĕр сĕткенĕпе çитĕнсен

Ачаран çĕр сĕткенĕпе, ĕçре пиçĕхсе çитĕннĕ çынна йывăрлăхпа хăратаймăн. Ялта алă усса лараймăн çав. Пахча, выльăхчĕрлĕх... – ĕлкĕрсе çитерме йывăр. Ачисен те ашшĕ-амăшĕпе пĕрлех ĕçе кÿлĕнме тивет. Урамра йытă хăвалама вăхăт çук вĕсен. Чăн та, ялти йывăрлăх хăш пĕрне хăратать. Шкултан тухсанах хулара тĕпленме тăрăшаççĕ. Çапах умри çулне, шăпине тăван çĕрпе çыхăнтарнă çамрăксем те сахал-им паян? Ялта ĕçлесе пурăнакансене, çамрăк çемьесене патшалăх пулăшма тăрăшни тăван тăрăхрах тымар яма илĕртет.

Çĕмĕрле районĕнчи Денис Харитонов шкултан вĕренсе тухсан ытти хĕр-упраç пек хулана тухса кайман, Кĕçĕн Тăванрах юлнă. Каччă фермер хуçалăхĕ йĕркеленĕ те çанă тавăрсах ĕçлеме пуçăннă. Çапла çирĕм çултах вăл хуçалăха ертсе пыма тытăннă. Денис Харитонов – республикăра чи çамрăк фермер!

– Ял теме те вĕрентет, – тет йĕкĕт. – Ирирех ĕçе кÿлĕннĕ те тавралăх тĕттĕмленмесĕр пÿрте кĕмен. Уйрăмах çу кунĕсенче ларса канма та вăхăт çук.

Пахчаçимĕç, улма-çырла туянса районти лавккасем тăрăх турттарса çÿрени те асрах-ха. Вăхăт иртнĕ май Денис ферма йĕркелеме шухăшлать. Ĕмĕтне çывăх çыннисене пĕлтерсен савăнсах йышăнаççĕ. Çемье пусăн-пусăн тенĕн пуçтарса пынă укçине фермер хуçалăхне хывать.

Харитоновсем малтан Кĕçĕн Тăванрах пĕчĕк ферма тума шухăшлаççĕ. Телее, шăп çак вăхăтрах çемье пуçĕ районта ферма сутнине илтет. Ăна туянса юсаса çĕнетеççĕ, выльăх-чĕрлĕх кĕртсе яраççĕ. Ĕç-пуç ăнса пынишĕн савăнмалла кăна та. Анчах тăван ялтан аякра вырнаçнă ферма вăй-хала, вăхăта ытларах та ытларах илме тытăнать. Çемье ĕнесем сума ирех çула тухнă. Унтах выльăх апатне турттарнă. Куллен ирпе-каçпа техникăна вăтăр çухрăм хăвалани хакла ларнă. Тата аякри пурлăха асăрхаса çитерме йывăр. Мĕн тăвăн, чăтмаллах, пĕр пуçăннă ĕçе тин пăрахаймăн. Ку вăхăт тĕлне вĕсен 14 ĕнепе 120 сурăха çитнĕ ĕнтĕ. Юрать, кĕçех çивĕч ыйтăва татса панă, Кĕçĕн Тăванкассинчех арканнă хуçалăхăн фермине илме май килнĕ.

Вăл унччченхипе танлаштарсан самай пысăкрах, ытлашши юхăнман. Апла выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерме пулать. Вырăнтах ферма уçма май килни çемьене хавхалантарнă. Харитоновсем сĕт-çу фермине аталантарнăран сурăхсене сутнă – икĕ лава харăсах туртаймăн.

«Фермер ĕçне пуçăнакан» программăпа патшалăх пулăшăвне – 990 пин тенкĕ грант – илни малалла хăюллăн утма çунат хушнă. Укçапа ăратлă ĕне выльăх, техника туяннă, витесене юсама тăкакланă.

Ялта фермер хуçалăхĕ хута кайни вырăнти ял тăрăхĕшĕн те аван. Ара юхăнса выртакан пулăхлă çĕр сахал-им паян? Каппла фермерсен пулăшăвĕпе вĕсене пусă çаврăнăшне кĕртме пулать.

Аталанса кăна пыракан хуçалăхран пысăк тупăш илеймĕн. Харитоновсен тупăшĕ те тăкаксене саплаштарсах пĕтет. Техника юсама, ГСМ, выльăх апачĕ туянма та самай тăкакланмалла.

– Ăратлă ĕнесем туянса 100 пуç тăмалăх вите хута ярасшăн, – ĕмĕчĕпе паллаштарать вăл. – Самăртма та пысăкрах вите кирлĕ.

Сĕт пăрăхĕ вырнаçтарасси, тислĕк кăларассине механизацилесси... – ĕмĕтсем пысăк. Анчах вĕсене пурнăçа кĕртме укçа самай кирлĕ, 3-4 млн тенкĕрен кая мар. Ирĕксĕрех ура çине çирĕп тăриччен тăхтама тивет. Выртан чул айĕнче шыв юхмасть тенĕ. Харитоновсем те палăртнине майĕпен пурнăçа кĕртсе пырасшăн. Паянхи куна вĕсен 40 ĕне выльăх. Усă куракан çĕр 100 гектар ытла. Уй-хир типсенех çуракине тухнă. Тырă, нумай çул ÿсекен курăк акса хăварнă.

Пĕр тăвансем, Дениспа Дима, ялти хушма хуçалăхсенчен те сĕт пуçтараççĕ. Хакне ытлашши йÿнетсе ямасăр туяннипе халăх вĕсем патне ытларах туртăнни паллă. Пултаруллă çамрăксен аллинче ĕç вĕресе тăрать. «Ялта ĕç çук», – тесе алă усса лармаççĕ.

### Пĕрне кура – тепри

Ырă тĕслĕх ыттисене хавхалантарни куç умĕнчех. Тăванкасси ял тăрăхĕнчен Михаил Шачкин та кăçал «Фермер ĕçне пуçăнакан» патшалăх программине хутшăннă. Нумай пулмасть тăван тăрăха ырă хыпар çитнĕ. Шачкин бизнес-планне ăнăçлă хÿтĕлесе грант илме тивĕçнĕ. Фермер выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесшĕн. Хальлĕхе унăн 18 ĕне выльăх. Çу енне, вĕсем пăруланă май, кĕтÿ татах пысăкланмалла.

Çĕмĕрле тăрăхĕнче фермер хуçалăхĕсем вăй илни савăнтарать. Районта йĕркеллĕ ĕçлесе пыракан ялхуçалăх организацийĕсем юлманпа пĕрех. Фермерсем тăрăшнипе, тен, ялхуçалăх тытăмĕ те вăй илĕ.

**Кăларăма Лариса НИКИТИНА хатĕрленĕ.**

**Хăвăртлăх. Хăрушсăрлăх. Хўтлĕх**

# Ӳсĕр водителе шеллесе ырă тăваймăн

Иртнĕ çул ӳсĕр водительсен айăпĕпе 56 çын пурнăçран вăхăтсăр уйрăлнă. 2013 çулпа танлаштарсан ку кăтарту тăватă хут пысăкрах. Кăçалхи тăватă уйăхра ӳсĕр водительсем çул çинче 34 инкек тума ĕлкĕрнĕ, çакна пула 15 çын çут тĕнчепе сывпуллашнă, 49-ăшĕ суранланнă. Çакна палăртнă Чăваш Енри çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн управленийĕн ертўçи, полици полковникĕ Владимир Романов.

Иртнĕ эрнере çул-йĕр хуралĕн ĕçченĕсем тăватă уйăхри ĕç кăтартăвĕсене тишкернĕ. Çак тапхăрта транспортпа пĕтĕмпе 408 инкек тунă, вĕсенче 56 çыннăн пурнăçĕ татăлнă, 591-ĕшĕ аманнă. Инкексен сăлтавĕ водитель урă пулманнипе (сăмах май, çакна медицина учрежденийĕнче тĕрĕслеттерме килĕшмен 1607 водителе тытса чарнă), хăвăртлăха ўстернипе (56 аварире 13 çын ĕмĕрлĕхех куç хупнă, 85-ĕшĕ суранланнă), çуран утса каçмалли ятарлă вырăнсенче чарăнманнипе (60 инкекре 5 çын пурнăçĕ татăлнă, 62-ĕшĕ аманнă) тата ыттипе çыхăннă.

Статистика тăрăх, çул çинчи кашни пиллĕкмĕш инкек çуран çўрекен дисциплинăллă пулманнипе сиксе тухать. Кăçалхи тăватă уйăхра 67 инкек 7 çыннăн пурнăçне пĕтернĕ, 64-шĕнне амантса хăварнă.

Çулсен пахалăхĕ те яланхиллех каласа çтарать. Вăл тивĕçтерменрен 206 авари пулнă, вĕсенче 26 çын вилĕм тупнă, 277-ĕшĕ суранланса больницăна лекнĕ. Ĕçлеме пултаракан вăйпитти çынсене çухатни кулянтарать.

Руль умĕнче тимсĕр пулни, çăмăлттайланса ӳсĕрле ларни нихăçан та ырри патне илсе çитермест. Çакна ăнланатпăр, анчах йĕркене пăхăнма чăтăмлăх çитерейместпĕр. Çулталăк пуçланнăранпа кăна республикăри çул-йĕр çинчи полици ĕçченĕсем "кикириккине" хĕретнĕ 1783 водителе тытса чарнă. Руль умне ӳсĕр пуçпа ларакан водитель çула та, ун айккипе пыракан çынна та курмасть. Улатăр районĕнче çавнашкаллисенчен пĕри ВАЗ-21099 машинăпа çула тухнă (майăн 16-мĕшĕнче). Анкă-минкĕ пуçпа тăватă кустăрмаллă хурçă утa итлеттерĕн-и вара? 39 çулхи арçын та çул хĕррине вирхĕнсе тухнă та çуран утакан çынсем çине кĕрсе кайнă. 52 çулхи арçынпа 50 çулхи хĕрарăм сурансене пула больницăна лекнĕ.

Ӳсĕр водитель хăйне çул-йĕр инспекторĕсем тытса чарсан кăна тăна кĕрет тейĕн. Вăрмар районĕнче пурăнакан 50 çулхи арçын машина рульне тăр кăнтăрлах ӳсĕрле тытса пынă (ку ĕç майăн 7-мĕшĕнче 14 сехет тĕлĕнче пулса иртнĕ). "Нимĕнле кĕтменлĕх те сиксе тухмĕ-ха", – тесе шухăшланă пулас. Çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн инспекторĕсем документсем тĕрĕслеме чарсан хăраса ўкнĕ. Йĕркене пăснăшăн хăйĕн тĕлĕшĕпе административлă протокол çыртарасшăн пулман. Полици ĕçченне вунă пин тенкĕ тыттарма хăтланнă. Лешĕ килĕшмен. Водителе кăмăла кайман протокол часах "кун çути" курнă. Вырăнти шалти ĕçсен пайне илсе çитерсен тепĕр тĕслĕх çиеле тухнă: руль умне ӳсĕрле ларнăшăн малтан та арçыннăн водитель удостоверенине туртса илнĕ.

Шупашкарта пурăнакан 25-ри çамрăк та машина рульне ӳсĕр пуçпа тытса пынăшăн хăй вăхăтĕнче водитель прависĕр юлнă. Нумаях пулмасть (майăн 20-мĕшĕнче) каллех айăпа кĕнĕ. Сĕнтĕрвăррине каймалли çул хĕресленнĕ вырăна светофор хĕрлĕ тĕспе çуннă вăхăтра ют çĕршывра туса кăларнă машинипе пысăк хăвăртлăхпа вирхĕнсе тухнă. Çак самантра унта тепĕр водитель симĕс çутă çуннине кура ВАЗ-2112 йышшипе Гремячево енне çаврăннă. Икĕ машина пĕр-пĕрне пырса тăрăнтармасăр иртеймен, пĕр-пĕрне самай "амантнă. ВАЗ автомобильри çынсем те хытах суранланнă. Тепĕр водителĕ вара машинине çул çинче пăрахса хăварса инкек пулнă вырăнтан çухалма васканă. Анчах Ауди машина хуçине часах тупса палăртнă. Вăл руль умĕнче хăй пулманнине ĕнентерме тăрăшнă. Унăн транспорчĕпе вăхăтлăх юлташĕ çўренĕ-мĕн. Суйни кăлăхах пулнă. Тепĕр икĕ кунтан тытса чарсан тунма пăрахнă. Çав чухнех ăна 8 талăка арестленĕ. Кунсăр пуçне унăн тепĕр çулталăк çурă водитель прависĕр пурăнма тивет.

Тен, эсир те ăнсăртран çула урă мар пуçпа тухнă водителе асăрхатăр. Тархасшăн, курмăш пулса айккипе ан иртĕр. **24-27-11** телефон номерĕпе çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцине шăнкăравлăр. Çав водитель çулĕ çине тăванăрсем, юлташăрсем, сывăх çыннăрсем лексен эсир хăвăра нихăçан та каçармăр. Çакна шута илĕр.

# Шкул саккинченех – инспекторсем

Сĕнтĕрвăрри районĕнче вырнаçнă "Белые камни" физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли лагерьте висĕ кун хушши ачапăчан хавасла та ĕçлĕ шăв-шавĕ янăраса тăчĕ. Чи лайăх отряд ятне тивĕçессишĕн кунта республикăри çул-йĕр çинчи çамрăк инспекторсен 25-мĕш слечĕ иртрĕ. Унта Чăваш Енĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчен çитнĕ 27 команда тата Чĕмпĕр облаçĕнчи çамрăк инспекторсем ăмăртрĕç. Темĕн тума та пĕлмелле, темле майпа та çул çинче асăрханмалла иккен. Чи малтанах çул-йĕр правилисемпе çыхăннă задачăсене "шĕкĕлчерĕç" çамрăксем. Нимĕн те калаймăн – пултарулла пулчĕç, ăста водительсемех тейĕн. Музыка конкурсĕнче çак енри пултарулăха кăна мар, çул çинчи йĕркене пĕлнине те кăтартма тиврĕ. Ятарлă "автохулара" вара икĕ кустăрмаллă велосипедпа тĕрĕс çўреме пĕлнипе паллаштарчĕç. Тепĕр конкурсра пирвайхи медицина пулăшăвĕпе хăвăрт тивĕçтерме пултарнине кăтартрĕç.

Конкурса хутшăнакансем лайăх хатĕрленнине палăртрĕ жюри. Çĕнтерўçĕсене уйрăм ачасем хушшинче те, ушкăнсемпе те палăртрĕç. Пĕтĕмĕшле кăтартупа Вăрнар районĕн командине çитекен пулмарĕ. Асăм çырма шкулĕнче вĕренекенсем çĕнтерўçĕсем пулса тăчĕç. Çак чыса вĕсем пĕрремĕш хут тивĕçмеççĕ. Раççей шайĕнчи конкурса та темиçе хутчен кайса килнĕ. Пĕлтĕр 80 ытла команда хушшинчи чи лайăх 10 ушкăн шутне лекнĕ. Кăçал та республика чысне тивĕçлĕн хўтĕлессе шанатпăр.

Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене слетра Красноармейскипе Тăвай районĕсем пайларĕç.



# Хавхалантарма ыйтнă

Чăваш Енри çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн инспекцийĕнчи патруль службин инспекторĕ Александр Сулагаев Крым Республикинче ĕçлĕ командировкăра пулнă. Пĕр кухине ун çумне урă мар çын çыпçăннă. Полици ĕçченĕ ăна хăйĕнчен хăпма ыйтнă. Ара, унсăрăн обществăлла вырăнта ӳсĕрле çўренĕшĕн административлă майпа явап тыттарма та пултарнăçке вăл ăна. Çакăн çинчен асăрхаттарсан Белогорска пурăнакан кĕсйинчен граната туртса кăларнă. 36 çулхи чăваш инспекторĕ çухалса кайман, гранатăна туртса илнĕ, усал шухăшлă çынна тытса чарнă. Ун тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе халĕ суда яма та ĕлкĕрнĕ.

Часах Крымран Чăваш Ене çыру çитнĕ. Унти следстви пайĕн ертўçи Чăваш Республикин шалти ĕçсен пайĕн ĕçченне харсăрлăхшăн, профессионализмшăн тата служба тивĕçне тўрĕ кăмăлпа пурнăçланăшăн хавхалантарма ыйтнă.

**КУЛĂШ, ПУЛĂШ!**



# Лартма вырăн хатĕрле

Республикăра çăмăл машинăллă граждансен йышĕ çуллен ўсет. Хальхи вăхăтра автомототранспорт шучĕ пĕтĕмпе – 333740 единица. Хальхи пурнăçра вăл е ку ыйтăва хăвăрт татса пама, ĕçе васкавлă пурнăçлама килте транспорт пулни пĕлтерĕшлĕ. Анчах çакăнпа пĕрле тепĕр ыйту çивĕчленет: машинăна упрама ятарлă вырăн çукран ăна ăçта май килнĕ, çавăнта лартаççĕ. Уйрăмах çакна хуласемпе район центрĕсенче каççерен сăнама пулать. Ачапăча площадкине те, чечек газонне те, тротуара та пăхмаççĕ. Çăл, пушартан сыхланмалли шыв гидранчĕсен вырăнĕсене йышăнаççĕ. Машинăсене çирĕплетмен вырăнсенче лартнăран çурт картишне çўп-çап тиесе тухакан транспорт кĕреймест.

Шупашкарта çак ыйту уйрăмах çивĕч тăрать. Кăçалхи тăватă уйăхра хулан Ленин районĕнчи административлă комиссии тирпей-илемлĕх йĕркине пăхăнманшăн 1694 протокол пăхса тухса 1516 штраф хунă. Вĕсен сумми 1854 пин тенкĕпе танлашнă. 172 водителе асăрхаттарнă.

Пирĕн вара машина хуçисене çакна асаилтерес килет. Пĕлтĕрхи декабрĕн 8-мĕшĕнче Чăваш Республикинче административлă йĕркене пăсни çинчен калакан саккуна улшăнусем кĕртнĕ. Вĕсем шăпах тирпей-илемпе çыхăннă правилăсене пырса тивеççĕ. Хулара е районсенче вырăнти самоуправлени тытăмĕ çирĕплетнĕ йĕркене пăсакан граждансене асăрхаттараççĕ е 1 пинрен пуçласа 2 пин тенкĕ таран штрафлаççĕ. Пуçлăхсемпе ертўçĕсен 2 пинрен пуçласан 5 пин тенкĕ таран кăларса хума тивет. Предприятисемпе организацисене 5 пинрен пуçласа 20 пин тенкĕ таран штраф хураççĕ. Административлă йĕркене иккĕмĕш хут пăссан штраф виçи икĕ хута яхăн е ытларах та пысăкланать.



Кăларăма Ирина НИКИТИНА хатĕрленĕ.

# Амăшӗн ăшшине кӗтсе илеймен

### Кушак çури тейӗн

Çут тӗнчене тин килнӗ пепке амăшӗ ачашшăн çупăрласа хăйӗн çунатти айне илессе кӗтни кăлăххах пулнă. Çамрăк хӗрарăм ачи тӗрес-тӗкел çуралнишӗн савăнас вырăнне ун пурнăçне тискеррӗн татнă.

Хăрушă инкек май уйăхӗн пуçламăшӗнче Шăмăршă районӗнчи Кивӗ Чукалта пулса иртнӗ. 19 çулти хӗрарăм ачине килтех çуратнă. Анчах пӗчӗкскер уншăн йывăр çӗклем пулнă. Пепке малашне алли-урине «çыхса» лартнине аван ăнланнă. Алăри ачапа ирӗклӗн саркаланса çӳреймӗн çав. Хайхискер нумай шухăшламан, ачан кун-çулне татса пахчара пытарнă. Кушак çури тейӗн. «Вилӗ çуралчӗ вăл», – тӳрре тухма хăтланнă кайран. Анчах мӗншӗн никама пӗлтермесӗр, вăрттăн кайса пытарнă?

– Пирӗн обществăра кун пекки пулмалла мар, – тенӗ Чăваш Республикинчи ача прависен уполномоченнăйӗ Вячеслав Рафинов. – Пепкене пурнăçран уйăрни – пысăк инкек.

Çывăх вăхăтра психологсемпе района çитсе килессине пӗлтернӗ вăл.

Унччен вара тепӗр хăрушă инкек Вăрнар тăрăхӗнче пулса иртнӗччӗ. 37 çулти амăшӗ дача çуртӗнче çулталăкри ывăлне пăвса вӗлернӗ, çавăнтах пăрахса хăварнă. Тӗпчев хӗрарăм ăс-тăн енчен чирлине палăртнă. Каллех ыйту тухса тăрать: нивушлӗ çакна никам та сисмен, пӗлмен? Çывăх тăванӗсем хӗрарăм хăйне урăхларах тыткаланине сиснех-тăр. Апла ăна кусран вӗçертмелле мар та...

Тепӗр инкек те шухăша ярать. Иртнӗ çулхи декабрьте Вăрнарта 28 çулти арçын килӗнче 4 уйăхри ывăлӗн ӳтне асăрханă. Мӗн сăлтавпа сывă ача пурнăçран вăхăтсăр уйрăлнă – калама йывăр. Анчах çамрăк çемье эрех-сăрапа иртӗхни паллă. Ахăртнех, ӳсӗрскерсем пепкине те йӗркеллӗ пăхайман.

Шупашкарти тепӗр тӗслӗх те чуна çӳçентерет. Хӗрарăм юлташ хӗрне ăсатма тухсан пӗрле пурăнакан арçын унăн çулталăкри хӗрачине урама çӗклесе тухнă та айăпсăр чуна пуçӗпе асфальт çине çапса вӗлернӗ.

### Инкекре хăвармалла мар

Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗ çумӗнче ачасене пулăшма йӗркеленӗ чрезвычайлă фонд (ЮНИСЕФ) пӗлтернӗ тăрăх – пусахланăран тӗнчере кашни пилӗк минутра ача пурнăçӗ татăлать. Сири, Африка, Ази, Латин Америки... Вӗсенче ачасене хӗсӗрлесси йăлана кӗнӗ темелле. Сăмахран, Латин Америкăра çул çитмен çамрăксен Великобританире пурăнаканнисемпе танлаштарсан пурнăçран уйрăлас хăрушлăх 70 процент пысăкрах. Кăнтăр Африка тӗнчере лайăххисен шутӗнче темелле. Анчах кунта та çемьери преступлени хисепӗ пысăк. Ашшӗ-амăшӗ, çывăх тăванӗсем пӗр шелсӗр ачисен пурнăçне татаççӗ. ЮНИСЕФ кăтартăвӗпе çул çитменнисен 7 проценчӗ кăна ачасем вилнине тата вӗсене хирӗç тунă преступление шута илекен çӗршывсенче пурăнать. 41 çӗршывра кăна ачасене пусахлама чарнă.

Çул çитменнисен правине хӗсӗрленине хирӗç ЮНИСЕФ «Ачасем хăрушлăхра» программа йышăннă. Вăл инкеке лекнисене пулăшма тивӗçлӗ.

Ачасене шкулта, çемьере пусмăрлани, хаяррăн тыткалани те хăрушă. Шел, çакă аталаннă çӗршывсенче вăй илсех пырать. Канадăра вӗренекенсен 14 проценчӗ палламан çынсем интернет урлă е СМС çырса хăратнине пӗлтернӗ. Улми йывăççинчен аякка ӳкмест тенӗ. Аслисене кура ачасен кăмăлӗ улшăннни, хаярланни сисӗнет.

Шел, Раççейре те лару-тăру çивӗч. Çемьери преступлени шайӗ чакмасть-ха. Кашни сехетре тенӗн упăшки е пӗрле пурăнакан арçын айăпӗпе пӗр хӗрарăм пурнăçран уйрăлать. Час-часах çакă ача-пăча куçӗ умӗнчех пулса иртет.

Çул çитменнисем çут тӗнчепе сывпуллашнин, çухалнин кăтартăвӗсем те пысăк. Иртнӗ çул çӗршывра 1400-е яхăн ача вилнӗ. 7 пиннӗшӗ çухалнă. Право органӗ палăртнă тăрăх – куллен вăтамран пилӗк ача пурнăçӗ татăлать.

Çӗршывра пӗчӗкскерсене çул-йӗр аварийӗ те пӗр шелсӗр çулать. Çулсерен 1500 ача аварире ӗмӗрлӗхех куçне хупать, 25 пиннӗшӗ вара больницăна çакланать.

Чăваш Енре те çулталăк пуçланнăранпа 69 ача аманнă, 3-шӗ вилнӗ. Сăлтавӗ паллă: ашшӗ-амăшӗн айăпне, вӗсем асăрхаса çитерейменнине пула шар кураççӗ вӗсем. Ытти инкек-синкек те кӗтсех тăрать темелле.



К. С. Петров-Водкин. Амăшӗ. 1913 ç.

# Ӗç стажӗ пӗчӗкленет

2015 çулхи июньтен «Чăваш Республикин ӗç ветеранӗ» ята илме çăмăлланӗ. Малашне арçынсен пӗтӗмӗшле ӗç стажӗ – 42 çул та 6 уйăх, хӗрарăмсен 37 çул та 6 уйăх пулмалла. Унччен вара арçынсен 45 çулран кая мар ӗçлемелле пулнă, хӗрарăмсен – 40 çул. Чăваш Республикин Пуçлăхӗ Михаил Игнатьев пулас ветеранăн ӗç стажне 2,5 çул кӗскетесси пирки кăларнă йышăнăва алă пуснă ӗнтӗ. Документ 2015 çулхи июнӗн 1-мӗшӗнчен вăя кӗрет.

Çапла вара республикăри 10 пин çын пенси çумне хушма укçа, 1082 тенкӗ илме пуçлать. Çыхăну пулăшăвӗшӗн те 50 процент йӳнӗрех тӳлеме тытăнӗç. Хальхи вăхăтра Чăваш Енре ӗç ветеранӗ ята 22 пин çын тивӗçнӗ.

«Чăваш Республикин ӗç ветеранӗ» ята илме тивӗçлисен ЧР Сывлăх сыхлавӗпе социаллă аталану министерствин «Социаллă пулăшу мерисемпе тивӗçтерекен центр» хысна учрежденийӗсен район-хуласенчи уйрăмӗсене паспорт копийӗ е ăна улăштаракан документ, 3х4 см виçеллӗ пӗр сăнӳкерчӗк тăратмалла.

# Сусăрсене пулăшма

Республикăра сусăрсем сахал мар пурăнаççӗ. Анчах эпир вӗсене урамра сайрахутра кăна тӗлпулатпăр. Обществăлла транспортра та асăрхаймăн вӗсене. Сăлтавӗ паллă – сусăрсене тухса çӳреме, хăйсене ирӗклӗн туйма условисем çителӗксӗртерех-ха. Суту-илӳ çурчӗсене, аптекăна, больницăна çитесси те вӗсемшӗн чӗр нуша. Унччен туса лартнă пурăнмалли çуртсене те кӗрсе тухма йывăр – ансăр картлашка çине пандус вырнаçтараймăн. Пулăшакан пулмасан урама та тухаймăн.

Юлашки вăхăтра лару-тăру палăрмаллах улшăнма тытăнни сисӗнет. «Граждансене социаллă хӳтлӗхпе тивӗçтересси» патшалăх программин «Пурте усă курма пултаракан хутлăх» çумпрограммине пурнăçа кӗртме Чăваш Ене федераци бюджетӗнчен 42 млн та 774,3 пин тенкӗ куçарса панă. Раççей Правительствин хушăвӗпе килӗшӳллӗн 71 регион 3 млрд тенкӗ ытла илӗ. Укçа инвалидсене пурте усă курма пултаракан объектсемпе пулăшусен тăкакӗсене саплаштарма кайӗ. Кăçал республикăра социаллă 30-а яхăн объекта «йӗркене» кӗртнӗ е сусăрсене куçса çӳреме меллӗ тунă.



Çуртсене, лифтсене кӗме, çул урлă каçма пулăшакан вырăнсем туса панă. Учреждени коридорӗнче те вӗсене курма пулать.

Сăмах май, иртнӗ çул РФ Ӗç министерстви çумпрограммăна пурнăçлама 65,5 млн тенкӗ уйăрнăччӗ. Унпа 27 социаллă объекта йӗркене кӗртме май килнӗ. Халӗ вӗсенче инвалидсем хăйсене хăюллăрах, шанчăклăрах туяççӗ. Хаваспах тухса çӳреççӗ, нумайăшӗ – хăй тӗллӗнех.

# Ют парăма та татмалла

**?** **Икӗ çул каяллах пӗрле ӗçлекен ыйтнипе поручитель пултăм. Вăл çăмăллатнă кредит хушма хуçалăх аталантарма илчӗ. Малтан йӗркеллех тӳлесе пычӗ-ха, анчах кӗçех парăмран пăрăнма тытăнчӗ. Çитменнине ӗçрен те кайрӗ. Халӗ банк мана парăма татма ыйтать, суд урлă шыраттарса илессипе хăратать. Урамра тӗлпулсан хӗрарăма темиçе хут кредит тӳлеме ыйтрăм, анчах кăлăххах. «Укçа çук», – тет кăна. Çав хушăрах хăй çăмăл машинăпа ярăнса çӳрет. Тӗрӗслӗхе мӗнле тавăрмалла?**

**Ирина М. Канаш районӗ.**

Парăма сирӗнтен те шыраттарни тӗрӗсех. Мӗншӗн тесен поручитель пулнă май парăмшăн эсир те яваплă. Ыйтăва татса пама сирӗн çакна тумалла:

– парăмçă хăй те тӳлеме пултарнине тата шыраттарса илме пурлăхӗ пуррине çирӗплетмелле. Паллах, кунта чупмасăр май çук. Документсем, хăвăра кирлӗ информаци пуçтармалла, паллакансенчен, кӳршӗсенчен ыйтса пӗлмелле. Вӗсем судра та çирӗплетме пултарччăр;

– тӳлеве каярах хăварма ыйтмалла. Мӗнпур суммăна тӳлеме йывăррине, çемье йывăрлăха кӗрсе ӳкме пултарнине çирӗплетмелле;

– ӗçтешӗр тӳлеймен вăхăтра пуçтараннă пени суммине чакарма тăрăшăр. Штраф питӗ пысăк пулсан суд урлă ăна чакарттарма май пур.

Çиччӗ виç те пӗрре кас тенӗн малашне поручитель пуличчен тӗплӗ шухăшлăр: шанчăклă çыннах пулăшатăр-ши?

# Ветерансене – хваттер

**?** **Тăван çӗршывăн Аслă вăрçинче çӗнтернӗренпе 70 çул çитрӗ. Паллă уяв тӗлне вăрçă ветеранӗсен йышӗ те палăрмаллах сахалланчӗ. Вăрçă хирӗнче илнӗ сурансене, чир-чӗре пула вӗсем çӗре вăхăтсăр кӗреççӗ. Тата çулсем те иртсе пыраççӗ çав. Юлашки вăхăтра вӗсен пурнăç условийӗсене çăмăллатма тăрăшаççӗ: хăтлă хваттерпе, машинăпа тивӗçтереççӗ, пенси укçи те пӗчӗк мар. Мана çакă кăсăклантарать: республикăри вăрçă ветеранӗсене кăçал та хваттерсем параççӗши? Мӗншӗн тесен пирӗн çывăх тăванăмăр темиçе çул ӗнтӗ хваттер черетӗнче. Анчах ниепле кӗтсе илеймест-ха. «Çӳлтен» каланă тăрăх – кăçал памалла имӗш.**

**Николай МИРОНОВ. Етӗрне хули.**

Чăваш Ене федераци бюджетӗнчен март уйăхӗнчех укçа куçнă. РФ Президенчӗн Указӗпе килӗшӳллӗн унпа Аслă вăрçă ветеранӗсен пурăнмалли условийӗсене лайăхлатмалла. Çак тӗллевпе тата 213 млн тенкӗ тăкакланмалла. Кăçал республикăри 190 вăрçă ветеранӗ хăтлă хваттерлӗ пулӗ.

2014 çулта вара çак тӗллевпе 100 млн тенкӗ уйăрнă. Ун чухне пурăнмалли условийӗсене 93 çын лайăхлатнă.

**Кăларăма Лариса НИКИТИНА хатӗрленӗ.**

◆ ÇИВĔЧ ЫЙТУ

# Хамăрăн тăрăшмалла

Камăн мĕн ыратать, вăл çавăн çинчен калаçать тенĕн çак статьяра "Хресчен сасси" хаçат вулаканĕсемпе пĕрле чуна уçас килет. Тен, хама канăç паман ыйту ыттисемшĕн те кăсăклă пулĕ, пĕр шухăшлисем тупăнĕç.

Хам кам пулнине пĕлтерем-ха апла. Сад ăсти теççĕ ман пеккисене. Хамăн аллăмсемпе лартса чĕртнĕ сад пахчинче чĕрĕк ĕмĕр ĕçлесе чун-чĕре киленĕвне туятăп. Çак сада Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунă ял çыннисене асăнса 1990 çулта лартнă. Виçĕ гектара яхăн çĕр çинче вăй илнĕскер хăйне евĕрлĕ чĕрĕ сад-палăк шутланать. Пĕр енчен пăхсан куç тулли сад савăнтарать, анчах унăн нуши-терчĕ çинчен шухăшлакан пур-ши? Тепĕр чухне пусăра çапларах шухăш та вĕçсе иртет: кирлех-ши паян çак сад? Тахçан маларахрисем упранса юлнă пулсан, тен, вăл чăнахах та ытлашшиччĕ. Анчах сад ĕрчетес ĕç çине алă сулчĕç те пахчасем юхăнма тытăнчĕç. Сахал-и унашкаллисем пирĕн республикăра?

Тĕслĕх шыраса инçе каймалла мар. Пирĕн Аслă Çĕрпӳел (Комсомольски районĕ) ял тăрăхĕнче виçĕччĕ вĕсем: Кĕçĕн Çĕрпӳеленче, Хирти Шăхасанта тата тăван Аслă Çĕрпӳелĕнче. Кунти сада "Красный Октябрь" хуçалăх саланса кайиччен кăшт маларах лартса чĕртнĕччĕ. Никам пăхса тăманран, тирпейлĕ хуçа пулманран иккĕшĕ куç умĕнчех пĕтрĕç вĕт. Пирĕн ялти кăна упранса юлчĕ. Эпĕ çак ĕçе пăрахса каяс пулсан ăна та çав шăпах кĕтет.

"Нимех те мар, çын вырăнне çын тупăнать", – тетĕр-и? Çук çав, пуринчен те сад ăсти пулмасть. Кунта вăйлă чун туртăмĕ кирлĕ, çак ĕçпе "чирлесе" кайни пĕлтерĕшлĕ. Етĕрне районĕнче паллă ертӳçĕ пулнă Аркадий Айдак пек çутçанталăкпа "чунпа чун калаçни" кирлĕ. Унашкал çын тупăнĕ тейĕпĕр. Анчах унăн пач хăйĕнчен килмен чăрмавсемпе тĕл пулма тивет-çке. Тĕслĕх шыраса каллех инçе каймăпăр.

Пĕлтĕр манăн пысăках мар сад пахчине панулми ăнса пулчĕ. Сада чĕртнĕренпе те астумастăп ун пеккине. Тухăç йывăрăшне чăтаймасăр çĕр-çĕр улмуççи хуçăлса аманчĕ. Тĕревсем те пулăшаймарĕç. Панулмине ăçта та пулин вырнаçтармалла вĕт. Ку тĕлĕшпе икĕ хутчен Интернет урлă пĕлтерӳ турăмăр. Кăлăхах – усси пулмарĕ. Хамăрăн район хаçатĕнче маларах пĕлтернĕ пулсан, тен, ăнăçатчĕ. Панулмине вырнаçтарас ыйтупа Комсомольски райповĕн канашĕн пуçлăхĕ Е. Карпеев патне çитрĕм. Ăна та пысăк виçепе туянма меллĕ мар-мĕн – хĕлле валли упрама ятарлă хуралтăсем çук. Ара, çĕрулми пуйтавăлĕнче упраймăн-çке.

Хакне те ытла пысăк ыйтманччĕ. Енчен те Патăрьелĕнчи питомник халăха килограмне вунă тенкĕпе таттарнă, тăкăннине пилĕк тенкĕпе сутнă пулсан эпĕ çав хакăн çуррине кăна ыйтнă. Панулмийĕ вара çав тери пахалăхлăччĕ. Елчĕк пасарне тухсан халăх: "Эсир химикат сапса çавăн пек ӳстеретĕр пулĕ", – тесе тĕлĕннĕччĕ. Сада чĕртнĕренпе нихăш çул та хими препарачĕпе усă курман. Удобрени вырăнĕнче пахалăхлă тислĕк кăна пулнă. Ăна эпĕ йывăç айне чавнă хыççăн кĕркунне хывса хăвараттăп. Çакăн усси питĕ пысăк, çуркунне пĕр шывĕпе пĕрле тымарсем патне вăл лайăх сăрхăнса çитет.

2005 çулта "Хыпар" хаçатра манăн "Сад савăнмасть саркайăк сассипе" статья пичетленнĕччĕ. Паян каллех унта çырни патне таврăнас килет, мĕншĕн тесен ыйту яланхиллех çивĕч тăрать. Мĕншĕн пĕр-пĕринпе кӳршеллĕ виçĕ-тăватă районăн пĕрле канашласа улмаçырла сĕткенĕ хатĕрлекен цех тумалла мар? Капла ман пек çынсем хăйĕн тарĕпе ӳстернĕ çимĕçе ăçта вырнаçтарасси пирки кулянса пуç ватмĕччĕç.

Иртнĕ çултанпа ют патшалăхсем пире хăйсен таварне сутма пăрахнă пирки пахчаçимĕçе хамăра тăрантармалăх хамăрăнах çитĕнтермелли çинчен калаçма пуçларăмăр.Тĕрĕс шухăш, питех те пĕлтерĕшлĕ тĕллев! Мĕн пысăкăш çĕршывра пурăнатпăр, анчах хамăра хамăр тăрантараймастпăр. Мăшкăл мар-и? Пуçтарса илнĕ тухăça та усăсăр çĕртсе яратпăр-çке. Хамăр патри улмаçырла валли ятарлă управсем тума мĕн чăрмантарать? Ютран кӳрсе килеккеннишĕн пысăк виçеллĕ пошлина укçи илсе тăма, паллах, çăмăлрах пулнă. Анчах халĕ лару-тăру улшăнмалла. Çак çивĕч ыйтăва патшалăх шайĕнче ятарлă хушу кăларса татса пани питех те тĕрĕс утăм, кирлĕ ĕç пулмалла.

**Вениамин СЕВЕРОВ, сад ăсти.**
**Комсомольски районĕ. Аслă Çĕрпӳел ялĕ.**

◆ АКЦИ

# Çуннă вырăнсенче хырлăх çитĕнĕ

Пĕтĕм Раççейĕпе иртекен вăрман лартмалли акцине (майăн 16-мĕшĕ) Чăваш Ен çыннисем те йышлăн хутшăнчĕç. Асаилтерер, ку мероприятине республикăн Çутçанталăк ресурсĕсемпе экологи министерстви, регионсем хушшинчи "ЭКА" обществăлла экологи организацийĕ тата хамăр регионти хастарçăсен "Симĕс хула" пĕрлешĕвĕ йĕркеленĕ.

Шупашкар лесничествин Атăл леш енчи вăрманĕ 2010 çулхи шăрăх çанталăка пула самай шар курнăччĕ. Ăна çĕнĕрен чĕртсе вăй парас тĕллевпе пархатарлă ĕçе экологи организацийĕсемпе пĕрле И. Я. Яковлев ячĕллĕ педуниверситет студенчĕсем, Шупашкар хулин ачасемпе çамрăксен пултарулăхĕн керменĕнче, "ВНИИР" пĕрлешӳре, "Эльдорадо" компанире вăй хуракансем, çутçанталăк ырлăхĕшĕн тăрăшакан вун-вун çын хутшăннă.

Çутçанталăк ресурсĕсен министрĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Евгений Юшин та, экологи организацийĕсен ертӳçисем те тĕслĕх кăтартнă. Шупашкар лесничествин ертӳçи Василий Богданов малтанах вăрман лартас ăсталăхпа паллаштарнă. Çакăн хыççăн пурте пĕрлехи ĕçе пикеннĕ. Вăрман çуннă вырăнсенче икĕ çулхи хыр хунавĕсем лартнă.

◆ ПĔЛМЕ КĂСĂКЛĂ

# Шăлан йывăç – йĕплĕ хулă



Халăхра шăлан йывăççи çинчен усал калаçнине илтмен. Çак сиплĕ йĕплĕ ӳсен-тăран çĕр çинче пур çĕрте те ӳснине палăртаççĕ. Чечекĕсем – пирĕшти тейĕн. Ахальтен мар Англире вăл наци чечекĕ шутланать.

– Чăваш Енре шăлан вырăнĕсем Сăрпа Атăл йăлăмĕсенче нумай пулнă, – ман шухăша пĕтĕмлетрĕ "Сăрçи" заповедникре ĕçлекен биологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ Александр Димитриев. – Унăн çулçисемпе чечекĕсем те, тымарĕсем те сиплĕхлĕ. Шăлан çырлисем чĕрĕлле çиме те юрăхлă, типĕтни – чей вĕретме. Пирĕн тăрăхра шăлан тĕсĕсем вуннăран иртеççĕ. Тăваттăшне Хĕрлĕ Кĕнекене кĕртнĕ. Нумай-нумай тĕмĕ шыв айне пулнă пулин те шăлан пирĕн вăрмансенче, уйрăм çынсен пахчисенче пурăнать-ха.

Раççейре июнĕн 6-мĕш кунне шăлан кунĕ тенĕ. Çав кун шăлан чечеке ларнă, çулла пуçланнă. Эй-й, мĕн тери ырă çут тĕнче! Çак кун ирхине ирех кил укçалăхĕнчи чӳлмексемпе çатмасене чечексемпе хĕмленекен шăлан тĕммисем айне кăларса лартнă. Çавна май савăт-сапа кĕвçĕк шăршăран тасалнă. Ваттисем шăланпа юнашар тăрса кăкăр туллин сывлама тăрăшнă, çакă чир-чĕртен упранма пулăшасса ĕненнĕ. Хĕрсем пичĕсене çутă сăн кĕртме шăлан чечекĕсене тытнă шывпа çунă.

Çакă кăсăклă: Хаяр Иван патша вăхăтĕнче шăлан çырли хаклă эмел шутланнă теççĕ. Ăна пухма пирĕн тăрăха ятарлă çынсем килсе çӳренĕ-мĕн. Хĕрлĕ çырлана пăчĕ-пăчĕпе укалă пурçăнпа, кăш тирĕпе улăштарнă.

Халĕ ял çыннисем шăлан çырлинчен варени, паста, повидло, пюре, квас, компот, кисель хатĕрлеççĕ. Иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче Етĕрне районĕнчи "Ленинская искра" колхоз ертӳçи Аркадий Айдак, Александр Усов лесовод, Григорий Никитин охотовед тата Николай Сапожников эколог ертсе пынипе çырмаллă вырăнсенче ятарласа шăлан нумай лартнă. Ку – хĕллехи кунсенче кайăксене çиме. Кунта асфальт çула та вырăнĕ-вырăнĕпе хĕлле юр тытса хăварма шăлан тăрăхĕсемпе хӳтĕлесе тухнă.

Вырăссем çуллен октябрĕн 1-мĕшĕнче Урине-шăланçă кунне паллă тăваççĕ. Çав кун тĕлне йĕплĕ хулă çимĕçĕсем питĕ лайăх пиçсе çитеççĕ, вĕсен сиплĕхĕ те пысăк пулать.

Ача чухне пулни-иртни асăмран тухмасть. Кукаçи – Кукăр Ванькки – çуллахи пĕр кунхине кукамай çӳçне сурăхсен çăмне иртмелли тем пысăкăш хачăпа касатчĕ. Мăкăртатрĕçмăкăртатрĕç те кукаçи тимлĕхне çухатрĕ пулас, кукамай хăлхин тăррине кăчăрт! касрĕ илчĕ. Юнĕ юхать – хăруша! Кукаçи сурана аран-аран пит шăллипе хупласа хучĕ. Кукамай кусĕпе мана шыраса тупрĕ: "Чуп-ха пахчана. Кĕлет пусĕнче шăлан ӳсет. 3-4 çулçине татса кил", – хушрĕ йăвашшăн. Каланă – тунă. Чăн та, мăкăл-мăкăл туса хăлха çине шăлан çулçисем хурса çыхса лартрĕç. Темиçе кунтанах тӳрленчĕ вĕт суран!

Мана урăххи шухăшлаттарать: чăвашсен ваттисен сăмахĕсенче, каларăшсенче, сăнавсемпе палласенче, тупмалли юмахсенче тата юрăсенче шăлана асăнмаççĕ. Куславкка районĕнчи Туканаш-Ватнер ялĕсенчи ватă кăмпаçăсем каланă тăрăх, шăлан чечекре, майра кăмпи – речĕпе. Унăн чечекĕсем вăхăта палăртаççĕ: ирхине 4-5 сехетре уçăлаççĕ, каçхине 7-8 сехетре хупăнаççĕ. Чечек папкисем уçăлманни – çумăра. Шăлан чечекĕсем çеçке тăкаççĕ – сивĕ сывлăм ӳкет. Урăх нимĕн те илтмен йĕплĕ хулă пирки. Çынна кирлĕ, ырă йывăç.

**Герман ЖЕЛТУХИН.**

◆ ПУÇАРУ

# Туслă халăх – типтерлĕ

Часах таса Троица кунĕ çитет. Христос тĕнне ĕненекенсемшĕн вăл – пысăк пĕлтерĕшлĕ уяв. Ăна чыслăн кĕтсе илме чылай малтан хатĕрленме тăрăшать ял халăхĕ.

Канаш районĕнчи Сивçырма пĕчĕк ял çеç, Янкăлч тăрăхĕнче вырнаçнă. Ял тăрăхĕн хысни пуян мар, тавралăха тирпей-илем кĕртес ĕç валли укçа çителĕклĕ пуçтараймасть. Анчах Сивçырмасем туслă та типтерлĕ, масара вĕсем кирлĕ пек тасатса ун тавра хăйсен вăйĕпех карта тытма шухăшланă. Тимĕр сетка, ытти хатĕр-хĕтĕр туянма малтанах 26 пин тенкĕ пуçтарнă, кайран тата 18 пин хушăннă. Темиçе кунра ял çыннисем 170 метр тимĕр карта тытнă, ытти ĕçе каярах вĕçленĕ. В. Петров, О. Владимиров, В. Кудрявцев, И. Степанов, В. Иванов, В. Кузьмин, Н. Матвеев, В. Викторов, В. Михайлов, Н. Моисеев, А. Иванов, В. Серафимов, М. Краснов, В. Егоров, Н. Никифоров, А. Григорьев, Н. Маркиянов, С. Кириллов тата ыттисем те яланхиллех пуçарулла та пултарулла пулнă. Ялти маттур хĕрарăмсем те тав сăмахне тивĕçнĕ.



Кăларăма Ирина НИКИТИНА хатĕрленĕ.



ÇĔНТЕРӲ: 70 ÇУЛ

**Куславкка – илемлĕ хула. Ватă Атăл хĕрри. Парксемпе сад пахчисем. Хула çумĕнче – çӳллĕ-çӳллĕ, тĕве курпунĕ евĕр сип-симĕс çеремлĕ, ешĕл каталлă сăрт. Çывăхрах вăрман: юманлăх, хурăнлăх, çĕмĕртлĕх... Пĕтĕм Раççей ăмсанмалла çăтмах вĕт!**

**Хĕвел ларас умĕн мĕн чухлĕ çамрăк халăх, хĕрупраç хĕвĕшет Атăл хĕрринче, уйрăмах Ирĕклĕ Раççей урамĕнче.**

**Почта çуртĕнчен сулахаялла пăрăнсан, тăвалла йывăç çуртсемлĕ Александр Тухланов ячĕллĕ урам хăпарса каять. Вăтăр çул каялла вăл Урицкий ячĕпе хисепленетчĕ. Унта Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Совет Союзĕн Геройĕ ятне тивĕçнĕ пирĕн енчи пĕртен-пĕр летчик, Куславкка çынни Александр Григорьевич Тухланов çемйипе пĕрле пурăнатчĕ.**

# Çав çулсен çухалмĕ чапĕ

Тăвата хутчен тĕл пулса калаçнă эпĕ вăрçă паттăрĕпе. Хăйĕн ачалăхĕпе çамрăклăхĕ çинчен икĕ-виçĕ хутчен те каласа панă вăл мана.

Хресчен ачи. 1916 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнче Куславкка ялĕнче нумай ачаллă çемьере çуралнă. Аслă Салари колхоз çамрăкĕсен шкулĕнче вĕреннĕ. Çу кунĕсенче ака-суха ĕçĕсене хутшăннă, ашшĕпе пĕрле çармăс енчи Элнет юханшывĕпе йывăç юхтарнă. 1929 çулта Куславккара Кĕçĕн Атăл (Воложка) шывĕ хĕрринчи анлă улăхра строительство деталĕсен завочĕ тума тытăннаççĕ. Ялти çĕр ĕçченĕсенчен ытларахăшĕ строительсем пулса тăраççĕ. Тухлановсен çемйин пуçлăхĕ Григорий Константинович та лашине колхоза парса платникре ĕçлеме пуçлать. Завод хута кайсан унта куçать. 1932 çулта шкул пĕтерсен ашшĕ хыççăн Сашка ывăлĕ те предприятие ĕçлеме кĕрет. Хăй ялан самолетпа вĕçме ĕмĕтленет. 19 тултарсан Шупашкарти аэроклуба вĕренме каять. Йышăнмаççĕ. Канашри автомеханиксен шкулĕнче ăс пухать. Тинех Шупашкарти аэроклуба шоферта ĕçлеме вырнаçать. Çулталăкран вăл аэроклуб курсанчĕ пулса тăрать. 1939 çулта Александр Тухланова çара илеççĕ те тӳрех çар авиатехникĕсен училищине ăсатаççĕ. Ун хыççăн вăл Гостомельти çар пилочĕсен шкулĕнче вĕренет.

Вăрçă. Çамрăк летчик Ил-2 штурмовикпа вĕçме хăнăхать. Мĕн тери йывăр та сăкăлталлă летчикăн пурнăç çулĕ. 1942 çулхи октябрĕн 22-мĕшĕнче вăл Вăтам Дон тăрăхĕнче пĕрремĕш çапăçăва кĕрет.

– Александр Григорьевич, вăрçă вăхăтĕнчи мĕнле хаклă документсем сыхланса юлнă сирĕн? – ыйтăччĕ эпĕ унран 1985 çулхи март уйăхĕнче.

Тухланов самантлăха нимĕн калама аптăрарĕ пулас, хулпуççине сиктеркелесе илчĕ.

– Ытлашши мĕнех юлтăр ĕнтĕ, – куçран пăхрĕ мана. – Алă айĕнче икĕ кӳнтĕлен пур. Вĕсенче манăн пĕтĕм пурнăç çăнарланнă темелле. Тепĕр чух вара вăхăт иртнипе сарăхнă страницăсене уçатăп та штабра ĕçлекенсем васкамасăр шăрçаланă йĕркесене вулатăп. Акă пăхăр.

"1942 çулхи октябрĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа 1944 çулхи сентябрьччен Ил-2 самолетпа пĕтĕмпе 158 хутчен çар вĕçевĕнче пулнă. Вĕçевре 184 сехет те 40 минут иртнерĕ".

Малалла каллех шăрçа пек йĕркесем выртаççĕ.

Вĕçевре пулни-иртнисем.

1937-1938 çулсенче аэроклубра вĕреннĕ чухне, документсем ĕненетерĕ тăрăх, аварисем туман.

Гостомельти çар пилочĕсен шкулĕнче пĕтĕм программа тăрăх вĕреннĕ вăхăтра авари-мĕн пулман.

"Хĕрлĕ Çарта Сывлăш-Çар вăйĕсенче 1941 çултан пуçласа 1942 çулччен çĕнĕрен вĕреннĕ тапхăрта 242 СБП (хăвăрт вĕçекен бомбардировщиксен полкĕнче), 507 ББПра (сывăхра бомбăсем пăрахакан полкра), 883 ШАПра (штурмлакан авиаци полкĕнче) йĕркене пăснă тĕслĕхсем те, аварисем те пулман.

Вăрçăри лару-тăрура Кăнтăр-Хĕвеланăç тата 3-мĕш Украина фрончĕсенчи 17-мĕш Сывлăш-Çар составĕнче, 1-мĕш Украина фронтĕнчи 2-мĕш Сывлăш-Çар йышĕнче рядовой летчикран пуçласа эскадрилья командирне çитиччен хăй те, ăна пăхăнакансем те катастрофăсем туман".

Хутсен типĕ чĕлхи йăлăхтарчĕ-ши – Александр Григорьевич ура çине çĕкленчĕ.

– Хурçă кайăка ватма-çĕмĕрме-и? – терĕ вăл командир сассипе çирĕппĕн. – Ăна эпир чунтан юратнă, ачашланă. Кирлĕ чухне унпа шăла çыртса, çамка çине тар тухиччен тарăхупа тулса тăшман çине вирхĕннĕ. Кашни утăм совет çĕрĕшĕн тӳпкенĕ фашист йыттисене. Ялан пĕр шанăçпа – нимĕç захватчикĕсене çĕнтерессишĕн, вĕсене кăнтăрла та, çĕрле те тĕпĕ-йĕрĕпе аркатассишĕн, юн ĕçенсен йăвине – Берлина – хăвăртрах çитессишĕн пурăннă. Мĕн вăй çитнĕ таран Аслă Çĕнтерĕве çывхартассишĕн çапăçнă.

Килте упранакан тепĕр хаклă документ – телеграмма. Ăна авиаци полкне 1944 çулхи августăн 8-мĕшĕнче 10 сехет те 30 минутра Мускавран ярса панăччĕ.

"Гварди лейтенанта Тухланова. Сире правительствăн чи пысăк наградине – Совет Союзĕн Геройĕ ятне – панипе саламлатпăр. Нимĕç фашисчĕсен оккупанчĕсене çапса аркатас ĕçре тата хастарлăрах пулма ырлăх-сывлăх сунатпăр. Новиков, авиацин тĕп маршалĕ; Шеманов, политпай начальникĕ; Ворожейкин, штаб начальникĕ."

– Çук-çук, мухтанмастăп эпĕ вăрçăран упранса юлнă хаклă хутсемпе, – сассине йăвашлатрĕ ветеран. – Вĕсем маншăн хĕрӳ çапăçусенче çĕнсе илнĕ орден-медаль пекех. Эпир, вăрçă терт-асапне тӳссе курнă çынсем, çав кунсене нихçан та хитрелетсе кăтартмастпăр. Апла тума камăн чĕлхи çаврăнтăр? Çакна та пĕлетпĕр: çав кунсен чапĕ нихçан та çухалмĕ.

Тĕлĕнмелле хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Александр Тухланов. Вăл Сталинград çывăхĕнче çапăçнă, Белгород патĕнчи операцие хутшăннă. Ил-2 самолечĕпе Курск-Орел пĕккинче çĕнтерӳллĕн вĕçнĕ, Донбасс, Ворошиловоград, Краснодон, Запорожье, Одесса хулисене ирĕке кăларнă чух палăрнă. Александр Григорьевич тăшманăн 9 танкне, 15 автомашинине, хăй тĕллĕн çӳрекен 3 туппине, 100 яхăн салтакĕпе офицерне пĕтернĕ. Çапăçусенчи паттăрлăхшăн ăна икĕ хутчен Хĕрлĕ Ялав, Александр Невский, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсемпе тата нумай медальпе наградăланă. 1944 çулхи августра Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.

Вăрçăра кирек кампа та инкек юнашар çӳрет. Çак паллă кун хыççăн икĕ эрне иртет-и иртмест-и – Варшавăран кăнтăрарах вырнаçнă Сандомир плацдармĕн тӳпинче Тухланов аслă лейтенант йывăр аманать. Ăна госпитальсенче çичĕ уйăх сиплеççĕ. Нумай хутчен тухтăрсен комиссийĕсем тĕрĕслеççĕ. Юлашкинчен 1945 çулхи мартра иккĕмĕш ушкăнри инвалид тесе йышăнаççĕ те киле ăсатаççĕ.

– Вăрçăн пĕр кунĕ те юн юхтармасăр иртмен, – ассăн сывларĕ Александр Григорьевич. Унăн куçĕ куççульпе тулчĕ. – Акă шăпа тени еплерех. Мĕн тумалла? Сывă пул, ĕмĕтĕм, шанчăкăм, пĕтĕм иртнĕ пурнăçăм. Çывăх юлташăм – самолет – мана Гитлер фашисчĕсен йăвине илсе çитерейменĕ... Сывă пул, тӳпе, сывă пул, авиаци. Куç хуралса килчĕ, йывăр туйăм пусрĕ чунăма.

Çĕнтертĕмĕр... Пĕтĕм чунтан-чĕререн, нихçан хĕпĕртеменле хĕпĕртĕ те савăннă пĕтĕм халăх, ахаль салтак та офицер, генерал та маршал... Уявсен аслă уявĕ пек уявланă ăна – Çĕнтерӳ кунне. Савăннă та, пуç хунисене асăнса макăрнă та: никамран вăтанмасăр, куççуле пач пытармасăр. Унтанпа эрне иртнĕ, уйăх, çулталăк, виçĕ çул... Анчах вăрçăра пулнă, унăн йӳçек сывлăшĕпе сывланă – çапăçса курнă – салтак вăрçăран яланлăха нихçан та тухаймасть, унран хăтăлаймасть те. Вĕçĕмсĕр асапланать.

Летчик чунне ăнланма йывăр. 1945 çулта Тухланов тăван тăрăха таврăнать, малтан Хусанта пурăнать, унтан Алтай крайне куçса каять. Пур ĕç те ăна ал çемми: тетелне те çыхать, пулă тытать, сад пахчи ӳстерет, платникре çӳрет, комбайнпа тырă вырать, ăста шофер. Утмăлмĕш çулсенче вăл – Куславккари автофургон комбинатĕнчи паллă слесарь.

– Александр Григорьевич, вăрçă çулĕсенче асра юлнă кун пирки пĕр-икĕ сăмах каласамăр...

– Чылай çул иртнĕ хыççăн калама çăмăл мар. Пурте пĕрлешсе пĕр куна çаврăнчĕç вĕсем. Хĕрĕх тăваттăмĕш çулхи Сăпас кунĕ ирхи апатра пирĕн каччăсем, тем, лара-тăра пĕлмерĕç. Кăшкăрашаççĕ, хаçатсемпе сулкалашаççĕ. Ман пата çитрĕç те: "Батя, саламлатпăр! Урра!" – кăшкăрса пуканĕпех мана вунă хутчен сывлăша ывăтрĕç, "Правда" хаçатра пирĕн дивизири 5 летчике, çав шутра мана та, Совет Союзĕн Геройĕ ятне пани çинчен Указ пичетленсе тухнă иккен!

Александр Григорьевич сывлăшри çапăçусем çинчен калаçмарĕ. Заводра унăн директорĕпе, Совет Союзĕн Геройĕпе Александр Николаевич Ленкинпа çывăх пулни çинчен ăшă сăмахсем каларĕ.

– Вăт, Усач, вăт, кавалерист-разведчик, мĕн тери чее те правур пулнă вăрçă çулĕсенче! Теветкеллĕ Усач. Мăйăхĕшĕн çаппа чĕннĕ ăна партизансем. Мана летчиксем мăйăхшăн Батя тетчĕç. Халĕ заводра икĕ мăйăхлă герой пулса тăтăмăр. Рабочисем мана, слесаре, директорпа ан арпаштарччăр терĕм, хырса пăрахрăм.

Пирĕн заводăн тепĕр çывăх çынни – Совет Союзĕн Геройĕ Михаил Девятаев. Вăл заводăн 55 метр çӳллĕш тăрпи тăррине чи малтан хăпарнă. Мăкшă каччи – Хусантан. Вăрçă çулĕсенче предприяти По-2 самолетсем пухса кăларнă. Девятаев ку тăрăхри çын пулнăран вĕсене илме килсе çӳренĕ, çар эскадрильисене çитерсе панă. Летчик планеркăсене хутшăннă. Пĕррехинче апрель вĕçĕнче завод начальникĕ Михаил Шелухин планеркăра майăн 1-мĕшĕ çывхарса килни, уяв ячĕпе завод тăрпи тăррине хĕрлĕ ялав çакасси çинчен пĕлтернĕ. Çак яваплă ĕçе пурнăçлама Михаил Девятаев килĕшнĕ. Мĕн тери хăюлăх! Май уявĕнче Куславкка çыннисем пурте тăрпа тăрринчи хĕрлĕ ялав çине савăнса пăхнă: çĕнтеретпĕр!

Каярахпа Михаил Петрович тыткăна лекнĕ. Унтан темиçе хастарпа пĕрле самолетпа тарма пултарнă...

Александр Григорьевичпа виçĕ сехете яхăн калаçса лартăмăр. Мĕнешкел кăсăклă калаçу пулчĕ! Йывăç пӳртрен урама тухрăмăр. Анаталла кăшт утрăмăр та чарăнтăмăр. Вăрçă паттăрĕ чĕнмерĕ. Вăл завод тăрпи еннелле пăрăнчĕ те çӳлеллеçӳлелле тинкерчĕ. Ăнлантăм: ăна халĕ те тӳпе чĕнет...

**Герман ЖЕЛТУХИН.**

## ТĔНЧЕРЕ... ТĔРЛĔРЕН КĔНЧЕЛЕ

### Суя укçа

Юлашки вăхăтра суя хут укçа сарăлма тытăнни сисĕнет. Вĕсем темиçе алă витĕр тухса банка та лекеççĕ. Финанс учрежденине çитиччен ниме тăман хутсене чăн укçаран уйăрса илекен тупăнманни тĕлĕнтерет. Мĕн тăвас тетĕн, ултавçăсем те ăсталăха ӳстерсех пыраççĕ çав.

Нумаях пулмасть Шупашкарти банка пĕр фирма укçа хывнă. Медицина оборудованийĕсем сутакан предприятин тупăшĕ те самай пулнă. Банк ĕçченĕсем чăштăрчăштăр хутсене йышăннă май 1 пин тенкĕлĕххисем хушшинче суя укçа асăрханă. Суту-илӳ çурчĕсенче купюрăна тĕрĕслемелли аппаратсем пурах ĕнтĕ. Мĕншĕн вĕсемпе усă курман-ши?

### Ĕçкĕре е тарçăра?

Пушкăртра пурăнакан арçын çăмăлттайлăхне пулах пăтăрмаха кĕрсе ӳкнĕ. Вун-вун çыннăн лăпкă пурнăçне татнă вăл. Право органне те ура çине тăратнă.

Ĕç-пуç вара çапларах пулса иртнĕ. Иванов (хушаматне улăштарнă) Мускавра ĕçлесе пурăннă. Вахта вĕçленсен килне каймалла тухнă. Çула май Чăваш Енре пурăнакан юлташĕ патне кĕнĕ те... çухалнă. Хăраса ӳкнĕ арăмĕ мăшăрне шырама право органне, тăванĕсене, паллаканĕсене те явăçтарнă. Кĕçех упăшки тупăннă.

– Мана Удмуртире тарçăра тытрĕç, çуртйĕр тунă çĕрте хистесе ĕçлеттерчĕç, – ăнлантарнă вăл.

Анчах чăнлăх çиеле тухсан упăшки тупăннишĕн хĕпĕртенĕ арăмĕ кĕç-вĕç каялла ларман. Ак тамаша, арçынна никам та тарçăра тытман-мĕн. Хĕрсех ышрăнă вăхăтра вăл юлташĕсемпе ĕçкĕ-çикĕре савăннă. Мускавра ĕçлесе илнĕ пысăк укçана самантрах ĕçсе-çисе пĕтернĕ. Пушă кĕсьепе киле мĕнле пырса кĕрĕн? Арăмĕ каçарманнине те аван ăнланнă. Апатăна кăвакал кутăн чăмнă тенĕн хăйхискер суеçтерме хăтланнă. «Суя пурнăç – çур пурнăç», – текеленĕ паллаканĕсене вăл. Çывăх çынсен тĕлпулăвĕ мĕнпе вĕçленни пирки калама хĕн. Анчах арçыннăн преступлени пирки право органне суйса пĕлтернишĕн явап тытмах тивет-тĕр.

### Макăру Стенине тасатаççĕ

Иерусалимри Макăру Стени (Стена Плача) çине çĕршер турист Турăран пулăшу ыйтса тата кĕлĕ туса çырнă хутсем хурса хăварать. Вăхăт иртнĕ май Стена вĕсемпе тулсах ларать. Ытти паломник валли вырăн та юлмасть. Ирĕксĕрех раввинăн стенана тасатма тивет. Ыйтса çырнă хутсем ăçта çухалаççĕ? Малтанах вĕсене офисра упраççĕ, кайран Оливка сăртĕнче пытараççĕ. Çулталăкра çапла икĕ хут тăваççĕ.

# Ах, анчах...

## Алимент çинчен маннă

«Ачана çуратсан хăех ÿсет», – тет пулас хăшпĕр ашшĕ-амăшĕ. Тĕпренчĕкĕсем пирки манса каять, вĕсен пурнăçĕ пачах кăсăклантармасть пулас.

Муркаш районĕнчи Юнкăри Шутеевсен çемье карапĕ нумай ишеймен, çырана çапăнса арканнă. Çул çитмен хĕрачи амăшĕпе пурăнма юлнă. Суд ашшĕнчен алимент шыраттарса илме йышăннă. «Паллах тÿлетĕп», – шантарнă арçын судра. Шаннă кайăк хăçан йăвара ларнă? Малтанлăха вăхăтрах тÿлесе тăнă-ха вăл, анчах кĕçех ачи пирки маннă. Суд приставĕ ăна темиçе хут та парăма татмаллине асăрхаттарнă. Кăлăхах, кăсăруклисем каланине хăлхана та чикмен. Парăм вара 106 пин тенкĕрен те иртнĕ.

Муркаш район прокуратури 55 çулти И. Шутеева явап тыттарма уголовлă ĕçе пуçарнă. Ăна тĕпчесе пĕтернĕ ĕнтĕ. Çывăх вăхăтра район сучĕ пăхса тухмалла.

## Укçа ăçта тăкакланă?

Саккун умĕнче пурте тан тенĕ. Пуçлăх вырăнне йышăнни те саваламан сакран хăтараймасть иккен. Тăвай районĕнчи ялхуçалăх производство кооперативĕн ертÿçине, Енĕш Нăрваш ял тăрăхĕн депутатне улталанăшăн айăплама ĕç пуçарнă.

Тĕпчев палăртнă тăрăх – 2009-2010 çулсенче пуçлăх кооперативра вăй хуракансене «ĕçрен хăтарма» йышăннă. Анчах кĕçех вĕсене шелленнĕ-ши, васкавлăн вăхăтлăх ĕç тупса панă. Çапла тума ертÿçĕне республикăри халăха ĕçпе тивĕçтерессипе ятарлă программа хута кайни хистенĕ. Программăна хутшăнакан предприяти-организацие патшалăхран хушма укçа уйăрни пуçлăх кăмăлне çемçетнĕ-мĕн. Янтă укçана камăн алăран вĕçертес килтĕр? Ертÿçĕ çынсене вăхăтлăх ĕç тупса панăшăн патшалăхран пулăшу илме суя документсем хатĕрленĕ.

Районти халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрта тĕрĕслесе тăман, суя документсем тăрăх предприятие 520 пин тенкĕ куçарнă. Хуçалăхра вăй хуракансем вара хăйсене ĕçрен хăтарнине, вăхăтлăх ĕçе йышăннине сисмесĕрех юлнă. Ара, вĕсемшĕн лару-тăру улшăнман, яланхилле хăйсен вырăнĕнчех тăрăшнă.

2010 çулта хайхи кооперативăн икĕ специалистне пушар хăрушсăрлăхне, санитарипе эпидемиологи ыйтнине пăхăнманшăн пĕрер пин тенкĕлĕх штрафланă. Анчах вĕсем пуçлăх пулăшнипе штрафа хуçалăх кассинчен тÿленĕ. Саккун урлă сиксе каçма хăтланнă пуçлăхăн явап тытма, тăкака туллин саплаштарма тивĕ.




## Куккук амăшĕ

Канаш районĕнчи хĕрарăма унчченех кĕçĕн çулхи ывăлĕсем тĕлĕшпе амăшĕн правинчен хăтарнă-ха. Анчах çакă та ăна тÿрĕ çул çине тăратайман, виççĕмĕш ачине çуратсан та йĕркене кĕмен вăл. Амăшне пĕчĕк хĕрачи кĕçех йăлăхтарнă пулас, больницăран килне илсе кайма килĕшмен. Ахăртнех пепки эрех-сăра ĕçме, савăнăçлă пурăнма чăрмантарнă пулас.

Ачине пăхма килĕшмен хĕрарăма хĕрачи тĕлĕшпе те амăшĕн правинчен хăтарнă.



## Штраф – 18 миллион тенкĕлĕх

Водительтен укçа ытларах сăптăрса илме хăтланни «Росгосстрах» пĕрлешÿ кĕсийне 18 578 пин тенкĕлĕх пушатса хăварнă.

Иртнĕ çулхи декабрьте республикăра пурăнаканран право органне çăхав çитнĕ. Арçын «Росгосстрах» пĕрлешÿн Чăваш Енри филиалĕн ĕçĕ-хĕлне тĕрĕслеме ыйтнă. Ахальтен мар, водитель вырăнти компанирен ОСАГО полисне илесшĕн пулнă. Анчах филиал ĕçченĕсем ăна малтан машинăна техника тĕрĕслевĕ витĕр кăларма ыйтнă. Водитель килĕшмесен ОСАГО полисне паман. Çакă арçынна самай тĕлĕнтернĕ. Хăйĕнчен укçа сăптăрма хăтланакансене явап тыттарма ыйтнă. Сăмах май, унччен те пĕрлешĕве саккуна пăхăманшăн пысăк штраф панăççĕ. Малашне те çаплах ĕçлесен çука та юлма пулать.

## Хăрушă тавăру

Нумаях пулмасть Канашри пушарта виçĕ çын çунса вилнĕ. Тĕпчев вĕсем хăйсен ирĕкĕпе пурнăçран уйрăлманнине, çурта юриех вут тĕртнине палăртнă. Кĕçех айăплисене те тупнă. Хăрушă инкекĕн сăлтавĕ паллă ĕнтĕ.

Вут-çулăм апрель вĕçĕнче алхаснă. Пушар хуралĕ çийĕнчех çитнĕ-ха, анчах кĕрлесе çунакан çурта тÿрех сÿнтереймен. Çунса пĕтеймен пÿртре вара виçĕ çын ÿтне тупнă. 60-ри хĕрарăмпа 41 тата 45 çулсенчи арçынсен пурнăçĕ синкерле татăлнă. Вĕсене пурнăçран вăхăтсăр уйăракансем – Канашри 39-ти пайтаçăпа унăн паллакансем, 24 тата 30 çулсенчи арçынсем.

Мĕн хистенĕ çамрăксене преступлени çулĕ çине тăма? Тĕпчев палăртнă тăрăх – инкеклĕ кун çамрăксем Мускава ĕçлеме кайма пуçтарăннă. Бригадăна хайхи пайтаçă машинăпа ăсатса яма килĕшнĕ. Ушкăнран пĕри «шапашкăна» хăйĕн паллаканне те пĕрле илме сĕннĕ. Виçĕ тус арçын патне ĕçе йыхравлама кайнă. Анчах йĕркеллĕ калаçса татăласси пулман, кил хуçипе хăнасем урамрах хирĕçсе кайнă. Арçын нумай шухăшласа тăман, çамрăка хиврен хуравланă та килне кĕрсе тарнă. Алăка çийĕнчех шалтан питĕрсе илнĕ. Преступниксем те хăйсене кÿрентерекене каçарман, тавăрма шут тытнă. Çурт йĕри-тавра бензин сапса вут тĕртнĕ те тарса çухалнă. Алăка тул енчен питĕрсе хунипе пÿртре ларакансем тухса тараймаан.

## Çын пурнăçĕ мĕн хак?

Тĕнчере укçа хуçа пулса тăнă чухне çынлăх, чыс, хисеп тени хăвăрт манăçа тухать иккен. Чăштăр-чăштăр хутшăн çын теприн пурнăçне татма та хатĕр.

Вăрмар тăрăхĕнче пулса иртнĕ инкек шухăшлаттарать. 32 çулти арçын хĕрарăм пурнăçне тискеррĕн татнă. Хальхинче ăна укçа мар, кил хуçин кайăк-кĕшĕкĕ канăç паман. Хуçалăхра чăх-чĕп йышлă усранине аван пĕлнĕ. Эппин, çимĕççĕрех лармасть. Хайхискер хуçи курман хушăра пĕр витре чăх çăмартипе виçĕ чăх хĕстерсе тухнă. Икĕ уралла «тилĕн» вăрттăн ĕçне хăвăрт сиснĕ. Тăвансем преступник хыççăнах çула тухнă. Вĕсене вăрă сиввĕн кĕтсе илнĕ. Пурлăха тавăрса пама ыйтсан урсах кайнă, 48 çулти арçынна пĕр хĕрхенмесĕр çĕçĕпе чикнĕ. Унтан хăвăрт кăна тухса тарнă. Аманнă çынна васкавлăн больницăна ăсатнă, анчах вăл йывăр сурана пула ĕмĕрлĕх куçне хупнă.

## Финанс пирамиди ишĕлнĕ

Пĕр банкăн Çĕнĕ Шупашкарти офисĕнчен кредит илнĕччĕ. Анчах санкци витĕмĕ финанс учрежденине те пырса çапрĕ курăнать, хайхи офис хупăнчĕ. «Шупашкарти ĕçлет, унта тÿлемелле», – лăплантарчĕç мана «хĕрÿ линипе».

Банк шыраса хулан тĕп урамĕпе утрăм. Пăхатăп – пĕр çурт умĕнче çынсем кĕпĕрленнĕ. Алăкĕ çине пысăк саспаллисемпе «ТрастКапитал» тесе çырса хунă. «Ак тамаша, ку та хупăннă иккен!» – сасăпах персе ятăм эпĕ.

– Эсир те укçасăр юлтăр-им? – шеллевлĕн пăхса илчĕ пĕри мана.

Хурав кĕтсе илмесĕрех хăйĕн хуйхине пĕлтерме васкарĕ. Услам илме ĕмĕтленсе пур-çук укçине хайхи банка хывнă-мĕн. Пысăк процентпа тавăрса пама шантарни илĕртнĕ пулас. Анчах шаннă кайăк йăвара пулман, нимсĕрех юлнă. Ун пеккисем татах пур. Халĕ акă хупă алăк умĕнче хывнă укçине те пулин тавăрассишĕн тапăртатса тăраççĕ.

Чăн та, малтанлăха кредит кооперативĕ йĕркеллех ĕçлесе пынă-ха. Анчах 2014 çул вĕçĕнче вклад хывнисене процент тÿлеме пăрахнă. Чăваш Енри офисĕсене сасартăк хупнă. Прокуратура тĕрĕсленĕ хыççăн республикăри 100 çын ултавçăсен капкăнне çакланни палăрнă. «ТрастКапитал» кредит потребитель кооперативĕ «финас пирамиди» мелĕпе йĕркеленнĕскер пулнă иккен. Малтанах вĕсем хăйсене шанчăклă банк пек кăтартаççĕ. Çынсенчен ултавлă майпа укçа сăптăрса илсенех пирамида шакăр-р! ишĕлсе анать. «ТрастКапитал» банкăн Чăваш Енри филиалĕ республикăра пурăнакансен 20 миллион тенкине вăрласа тухса кайнă.

Сăмах май, иртнĕ çул республикăра 15 финанс пирамиди хăйĕн ĕçĕ-хĕлне чарса лартнă. Вĕсен капкăнне те 500 çын çакланнă. Тăкак – 270 миллион тенкĕлĕх.

Телее, эпĕ йăнăшнă иккен. Хайхи офиссем пĕр-пĕринпе çывăхрах вырнаçнипе, яччĕсем пĕр пекрех илтĕннипе арпаштарнă-мĕн.

**Л. АЛА.**

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунтикун, июнĕн 1-мĕшĕ**

7.00 «НАША РЕСПУБЛИКА. ГЛАВНАЯ ТЕМА» (12+)
7.30 «ÇАВРА СĔТЕЛ» (12+)
8.30 «СПОРТ ДЛЯ ВСЕХ» (12+)
9.00 «ПЕРСОНА» (12+)
13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.15 «ЫЛТĂН ÇÿПÇЕРЕН» (6+)
19.30 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
20.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
20.45 «ПРОФИЛЬ ЗДОРОВЬЯ» (12+)
21.00 «СДЕЛАНО В ЧУВАШИИ» (12+)
21.15 «ТАНЕЦ МАЛЕНЬКИХ УТЯТ». МЕЖДУНАРОДНЫЙ ФЕСТИВАЛЬ (0+)

**Ытларикун, июнĕн 2-мĕшĕ**

7.00, 13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
7.15 «ЫЛТĂН ÇÿПÇЕРЕН» (12+)
7.30 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
8.00, 14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
8.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
8.45 «ПРОФИЛЬ ЗДОРОВЬЯ» (12+)
9.00 «СДЕЛАНО В ЧУВАШИИ» (12+)
19.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.30 «ПЕХИЛ» (12+)
20.30 «НАША РЕСПУБЛИКА. ГЛАВНАЯ ТЕМА» (12+)
21.00 «БУМЕРАНГ» (12+)
21.30 «СОВРЕМЕННАЯ ВЕРБОВКА. ОСТОРОЖНО – ЗОМБИ!» (16+)
22.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)

**Юнкун, июнĕн 3-мĕшĕ**

7.00, 13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
7.15, 13.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
7.30 «ПЕХИЛ» (12+)
8.00, 14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
8.30 «НАША РЕСПУБЛИКА. ГЛАВНАЯ ТЕМА» (12+)
9.00 «БУМЕРАНГ» (12+)
9.30 «НА ОЛИМПЕ» (12+)
19.15 «ÇАВРА СĔТЕЛ» (12+)
20.30 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
20.45 «СПОРТ ДЛЯ ВСЕХ» (12+)
21.00 «МЫСКАРАСĂР ТУЙ ПУЛМАСТЬ». КАМИТ (12+)

**Кĕçнерникун, июнĕн 4-мĕшĕ**

7.00, 13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
7.15 «ÇАВРА СĔТЕЛ» (12+)
7.30 «ЛИТЕРАТУРА ТĔПЕЛĔ» (12+)
8.00, 14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
8.30 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
8.45 «СПОРТ ДЛЯ ВСЕХ» (12+)
9.00 «ТЕРРИТОРИЯ ЗАНЯТОСТИ» (12+)
12.30 «НАША РЕСПУБЛИКА. ГЛАВНАЯ ТЕМА» (12+)
19.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.30 «ЛИТЕРАТУРА ТĔПЕЛĔ» (12+)
20.30 «ОДИН ДЕНЬ С ПРОФЕССИОНАЛОМ» (12+)
20.45 «ЗАКОНОДАТЕЛИ» (12+)
21.15 «ОБ ЭТОМ ПОДРОБНЕЕ» (12+)
21.30 «КРУГЛЫЙ СТОЛ» (12+)
22.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)

**Эрнекун, июнĕн 5-мĕшĕ**

7.00, 13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
7.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
7.30 «ЛИТЕРАТУРА ТĔПЕЛĔ» (12+)
8.00, 14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
8.30 «ОДИН ДЕНЬ С ПРОФЕССИОНАЛОМ» (12+)
8.45 «ЗАКОНОДАТЕЛИ» (12+)
9.00 «КРУГЛЫЙ СТОЛ» (12+)
13.30 «НАША РЕСПУБЛИКА. ГЛАВНАЯ ТЕМА» (12+)
19.15 «ЮРĂ ÇАВРĂМĔ» (12+)
19.30 «IT-НЕ ОБОЙТИ» (12+)
20.30 «БУХТЫ-БАРАХТЫ»(12+)
21.00 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (12+)
21.30 «УМЕРЕТЬ В СТАЛИНГРАДЕ» (12+)

**Шăматкун, июнĕн 6-мĕшĕ**

7.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
7.15 «ЮРĂ ÇАВРĂМĔ» (12+)
7.30 «IT-НЕ ОБОЙТИ» (12+)
8.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
8.30 «БУХТЫ-БАРАХТЫ» (12+)
9.00 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (12+)
9.30 «АСАМАТ» УШКĂНĂН КОНЦЕРЧĔ (12+)
12.00 «САЛТАКА КАЧЧА КАЯТĂП». РОМАНТИКĂЛЛĂ КОМЕДИ (12+)
14.30 «НАША РЕСПУБЛИКА. ГЛАВНАЯ ТЕМА» (12+)
17.00 «МАУГЛИ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
18.30 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
19.00 «ЫРĂ КĂМĂЛПА» (12+)
19.30 «КАÇХИ ТĔЛПУЛУ» (12+)
20.00 «ÇАПЛА ПУЛТĂР!»

**Вырсарникун, июнĕн 7-мĕшĕ**

9.00 «ЧУЛ ЧЕЧЕК». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
10.30 «КĔМĔЛ САСĂ» КОНКУРСĂН ГАЛА-КОНЦЕРЧĔ
13.30 «ЯЛТА ПУЛСА ИРТНĔ ĔÇ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ
17.00 «БУХТЫ-БАРАХТЫ» (12+)
18.00 «НАША РЕСПУБЛИКА. ГЛАВНАЯ ТЕМА» (12+)
18.30 «БАТАЛЬОН МОЕЙ РОДИНЫ» (12+)
19.30 ФРАНЦИ ХĔРĔ ТЫТКĂНАРĔ ЧĔРЕНЕ». КАМИТ (12+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Май, 27 – юнкун | Май, 28 – кĕçнерникун | Май, 29 – эрнекун | Май, 30 – шăматкун | Май, 31 – вырсарникун | Июнь, 1 – тунтикун | Июнь, 2 – ытларикун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 3.19 | 3.18 | 3.16 | 3.15 | 3.14 | 3.13 | 3.12 |
| | анать | 20.18 | 20.19 | 20.21 | 20.22 | 20.24 | 20.25 | 20.26 |
| Кун тăршшĕ | | 16.59 | 17.01 | 17.05 | 17.07 | 17.10 | 17.12 | 17.14 |
| УЙĂХ | тăхри | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулли уйăх (17.14) |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 9-мĕш кун | 10-мĕш кун | 11-мĕш кун | 12-мĕш кун | 13-мĕш кун | 14-мĕш кун | 15-мĕш кун |
| | | Хĕр паллинче | Тараса паллинче | Тараса паллинче | Тараса паллинче | Скорпион паллинче | Скорпион паллинче | Ухăçă паллинче |

## ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ

### Опекуна парĕç-ши?

**? Манăн виçĕ ача. Вĕсем çитĕнсе пурнăç çулĕ çине тăнă ĕнтĕ. Нумай пулмасть вара тăванăн ачине опекăна илтĕм. Манауншăн амăшĕн капиталне парĕç-ши?**

**Мария СЕРГЕЕВА. Тăвай районĕ.**




Амăшĕн капиталне 2007 çул хыççăн иккĕмĕш, виççĕмĕш е ытларах та ача çуратнă, усрава илнĕ хĕрарăмсене параççĕ. Опека шучĕпе çемьене илнĕ ачасем унта кĕмеççĕ. Çавăнпа сире амăшĕн капиталĕ тивмест.

### Медальсĕр хăварчĕç

**Çак кунсенче Элĕк тăрăхĕнчен шăнкăравларĕç. Зоя ГОРДЕЕВА хăйне канăç паман ыйтăва пĕлтерчĕ, пулăшма ыйтрĕ.**

*– Аннем, Наталия Никитична Никитина, хĕл кунĕсенче ман патăрта, Элĕк районĕнче пурăнчĕ. Унăн пенси укçине те Элĕк районне куçарттартăмăр – кашнинчех уншăн вăрăм çула тухаймăн. Анчах регистрацире Красноармейски районĕнчи Чатукасси ял тăрăхне кĕрекен Çавалçырмарах тăрать-ха. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 70 çул çывхарнă май анне тăван ялне кайрĕ – паллă уява ялйышпа кĕтсе илме. Тата тыл ветеранĕ вăл. Çамрăк чухне самай нушаланма тивнĕ, вăрман каснă, окоп чавнă. Вăл курнă терт-нушана асаилес пулсан çырса та пĕтереймĕн.*

*Тыл ветеранĕсене те юбилей медальне парассине пĕлсен иксĕмĕр те савăнтăмăр. Анчах кĕтни кăлăхах пулчĕ. Аннене аса та илмерĕç, саламламарĕç. Ăна медаль илекенсен списокне те кĕртмен иккен. Тĕрĕслĕх шыраса Элĕкри социаллă хӳтлĕх пайне кайрăмăр: тен, пенси куçарнипе медаль те çĕнĕ адреспа парĕç? «Сирĕн аннĕре регистрациленĕ вырăнта ыйтмалла», – терĕç пире унта ларакансем. Çапла вара вĕçнехĕрне тухса пĕтеймерĕмĕр. Анне хăйне тĕксе хăварнăшăн пăшăрханчĕ. Мĕншĕн çапла пулса тухрĕ-ши? Хальхи вăхăтра вăл тăван ялтах, Çавалçырмара пурăнать. Хăйне медаль шыраса тупасса, пуçлăхсем йăнăша тӳрлетессе шанать, кĕтет, – терĕ пăлханчăклă сасăпа. – Пуçлăхсем ăна кăна мар, пире те кӳрентернĕн туйăнать.*

Ыйтăва татса пама ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин «Социаллă пулăшу меросемпе тивĕçтерекен центр» хысна учрежденийĕн Красноармейски районĕнчи социаллă хӳтлĕх пайĕпе çыхăнтăмăр. Светлана Андреева тĕп специалист акă мĕн пĕлтерчĕ:

– Чăн та, ку ыйтупа Чатукасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Геннадий Михайлов та килсе кайнăччĕ. Пĕрле пăхса тухса ыйтăва татса панă. Тыл ветеранне, Наталия Никитична Никитинăна медаль илекенсен списокне кĕртнĕ. Шел, çакăн хыççăн ял тăрăхĕн пуçлăхĕ социаллă хӳтлĕх пайне çитсе медаль илме, ветерана чыслама вăхăт тупаймарĕ курăнать. Награда вара хуçине кĕтет.

Ĕçе вĕçне çитерме Чатукасси ял тăрăхĕпе те çыхăнтăмăр.

– Пуçлăх Красноармейскине тухса кайнă-ха, – илтĕнчĕ çамрăкрах çын сасси (темшĕн ятне каламарĕ вăл). – Медаль хатĕр пулсан шăнкăравласа систерĕп, çула май илсе тухтăр.

Ыйтăва татса панă темелле, анчах тыл ветеранĕ Çĕнтерӳ кунĕнче медальсĕр юлни шухăшлаттарать. Тĕрĕссипе ăна çакă та мар (хăйĕн ĕмĕрĕнче сахал мар награда илме тивĕçнĕ), хăйне хисеплеменни, паллă уявра манса кайни пăшăрхантарать. Çĕнтерĕве çывхартма хĕрарăм йывăр ĕçре нушаланнă, çинĕ-çими пурăннă, чăтнă, найкăшман.

## РЕКЛАМА

### Аграрисене – пулăшу

Раççей ялхуçалăх банкĕн Чăваш Енри филиалĕ аграрисене ака-суха ирттерме иртнĕ çулхинчен укça-тенкĕ 40 процент ытларах уйăрнă. Çулталăк пуçланнăранпа сезонри ĕçсене пурнăçлама 700 млн тенкĕ панă.

– Раççей ялхуçалăх банкĕн филиалĕ республикăри АПКна финанслас тĕлĕшпе шанчăклă партнер пулса тăчĕ. Уй-хир ĕçĕсем валли кредит панă çĕрте унăн тӳпи 90 процент ытла. Хальхи вăхăтра банк аграрисене укçа енчен туллин тивĕçтерме пултарать, – палăртнă Чăваш Енри филиал директорĕ Ирина Письменская.

Кăçал ака-суха валли паракан кредит ставкине банк май çитнĕ таран пĕчĕклетнĕ. РФ Правительстви субсидиленине шута илсен ялхуçалăх таварне туса илекенсемшĕн процент ставки пĕлтĕрхи шайрах юлать. Республикăри аграрисем Раççей ялхуçалăх банкĕнчен ГСМ, саппас пайĕсем, удобрени, ӳсен-тăрана хӳтĕлемелли хатĕрсем туянма тата ытти тĕллевпе кредит илме пултараççĕ.

*РФ Тĕп банкĕн 3349-мĕш номерлĕ генеральнăй лицензийĕ.*

### Çурт-йĕр лартакансене пулăшма

*Хаçат редакцине çурт-йĕр лартассипе, кил-çурт тытса пырассипе çыхăннă ыйтусем йышлă килеççĕ. Çакна шута илсе эпир вĕсене Василий Иванов инженер-строителе хуравлама ыйтрăмăр. Вăл хаваспах килĕшрĕ. Хаçатăн паянхи кăларăмĕнче хăшпĕр ыйтăвăн хуравĕсемпе паллашма сĕнетпĕр.*

**Пӳрте кĕмелли пусма картлашкисене мĕнле виçесемпе тумалла?**

– Картлашкан вăрăмăшĕ – 1100 мм, сарлакăшĕ – 270-300 мм, çӳллĕшĕ 150-180 мм пулмалла. Пусма картлашкисене пурне те пĕр виçепе тумалла.

Хулари нумай хваттерлĕ çуртри пусма картлашкисен виçисем çапларах: тăршшĕ – 1050 мм, сарлакăшĕ – 300, çӳллĕшĕ – 150 мм.

**Пӳрт алăкĕ умĕнче тамбур туса лартасшăн. Майне-шывне чухламастăп. Ăнлантармăр-ши?**

– Çурта кĕрекен алăк умĕнче пĕчĕк çенĕк е пӳлĕм тăваççĕ. Ăна тамбур теççĕ. Унта икĕ алăк лартаççĕ. Вĕсене тулаш еннелле уçăлмалла тăваççĕ. Тулти алăка уçса хупнă хыççăн тамбурти ăшă сывлăш сиввипе хутшăнать. Çакна пула пӳлĕмри ăшă кăшт кăна çухалать.

**Çуртри пӳлĕм çӳллĕшне кашни хăйне май пăхса палăртать. Тĕрĕссипе вăл мĕн чухлĕ пулмалла-ши?**

– Строительство нормисемпе тата правилисемпе килĕшӳллĕн пурăнмалли пӳлĕм çӳллĕшĕ 2,5 метртан кая пулмалла мар. Европăри çĕршывсенче, тĕслĕхрен, вăл 2,7 метрпа танлашать. Çӳллĕ пӳлĕмре хĕлле сивĕ, ăна хутса ăшăтма пайтах тăкаклanмалла. Çав вăхăтрах ун пек пӳлĕмре сывлăш усăрах.

**Çурта кĕмелли алăкăн сарлакăшĕ тата çӳллĕшĕ çинчен пĕлес тенĕччĕ. Пулăшаймăр-ши?**

– Пурăнмалли çуртра стандартпа туса кăларакан алăксем лартаççĕ. Алăк анисен çӳллĕшĕ – 2000 мм, сарлакăшĕ 900, 800, 700 тата 600 мм пулать. 900 мм сарлакăшлине пӳрте кĕнĕ вырăнта лартаççĕ, 800 миллиметрлине – хăнасене йышăнмалли тата çывăрмалли пӳлĕмсенче. 700 мм сарлакăшлă алăк апат-çимĕç хатĕрлемелли пӳлĕме юрăхлă, 600 миллиметрлине çăвăнмалли тата ытти пӳлĕмсенче вырнаçтараççĕ.

**Ялта чаплă çурт çĕклерĕмĕр. Анчах унта пурăнмашкăн куçма ĕлкĕреймерĕмĕр-ха. Алăк хăлăпĕсем лартмалла. Вĕсене мĕн çӳллĕшĕнче вырнаçтарсан аван-ши?**

– Стандарт йĕрки алăк хăлăпне, çавăн пекех питĕркĕчне те, урай шайĕнчен 1 метр çӳллĕшĕнче лартма сĕнет. Мĕншĕн шăпах çавăн пек тетĕр-и? Вăтам пӳллĕ çыннăн чавси урай шайĕнчен 1 метр çӳллĕшĕнче-мĕн. Унашкал çынсем пирĕн хушăра 90 процент ытла, çавăнпа строительство ĕçĕсенче вĕсен виçисене шута илеççĕ. Тĕслĕхрен, çакна тĕпе хурса пукан çӳллĕшне 44-46 см, апат сĕтелне 78 см тăваççĕ.

### Ăшши сиплĕ пултăр!

В. Иванов инженер-строитель килти хуçалăхра усă курмалли мунча планĕпе паллаштарать. Вăл мунча умĕнчен, çăвăнмалли тата çапăнмалли пӳлĕмсенчен тăрать. Вырăнти условисене шута илсе пӳлĕмсен лаптăкне кăшт пĕчĕклетме е пысăклатма юрать.

А. В. Ивановăпа В. В. Ивановăн 2013 çулта "Хороша семейная баня" ятпа кĕнеке пичетленсе тухнă. Мунча мĕнле кĕмеллине унта тĕплĕ çырса кăтартнă. Тарласа вырмалли, милĕкпе çапăнмалли, çăвăнса тасалмалли, организма çирĕплетмелли тата ытти меслетсемпе паллаштарнă. Килти хуçалăхра мунча вырăнне тĕрĕс суйласа илни те пĕлтерĕшлĕ. Çакăн çинчен те çырса кăтартнă. Мунча никĕсне яраcсипе, тăррине витессипе, хуралтăна тунă чухне мĕнле строительство материалĕпе усă курассипе, унăн кăмакипе мăрйине тăвассипе çыхăннă ыйтусене те хуравланă.




*Паянхи мунча планне çӳлерех асăннă кĕнекерен илнĕ. 1 – мунча умĕ, 2 – тамбур, 3 – ларса канмалли сак, 4 – тумтире тата таса кĕпейĕме çакмалли çекĕлсем, 5 – хывăнса тăхăннă чухне кирлĕ пулакан сак, 6 – пирвайхи медицина пулăшăвĕ памалли аптечка, мунча кĕнĕ чухне усă курмалли хатĕрсем, кĕпе-йĕм çумалли порошок тата çавăн йышши япаласем упрамалли шкапсем, 7 – сĕтел, 8 – кĕпе çумалли машина, 9 – çăвăнмалли пӳлĕм, 10 – вĕри шыв савăчĕ, 11 – сивĕ шыв савăчĕ, 12 – ларса çăвăнмалли лутра саксем, 13 – массаж тумалли, ачасемпе ватăсене çунă чух кирлĕ пулакан сак, 15 – çапăнмалли пӳлĕм, 16 – кăмака, 17 – çапăнмалли лапкасем, 18 – лапка картлашки.*

**Кăларăма Лариса НИКИТИНĂПА Ирина НИКИТИНА хатĕрленĕ.**


«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăйтытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – В.В. ТУРКАЙ
Редакторшăн – Л.А. Никитина
РЕДКОЛЛЕГИ:
В.В. Петрова – редактор
И.П. Никитина – корреспондент
Л.А. Никитина – корреспондент
Е.А. Трофимова – хаçат операторĕ

www.hypar.ru,
e-mail: hreschen@cbx.ru
Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем:
директор-тĕп редактор – 56-00-67,
пайсем – 62-50-06, 62-04-54,
реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70.
Факс (8352) 62-50-06

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 [1] регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пуснă.
Заказ 1970
Тираж 3384

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.